К81Чув-923
А65
Ч-40003

Е.А. Андреева, Т.В. Денисова, В.И. Игнатьева

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ТАТА ĂНА ВĔРЕНТЕС МЕСЛЕТЛĔХ

Национальная библиотека ЧР
4-040003

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К К814чув-923
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ БЕСПЛАТНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
65

Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви
Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕренту учрежденийĕ
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

Е.А. Андреева, Т.В. Денисова, В.И. Игнатьева

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ТАТА ĂНА ВĔРЕНТЕС МЕСЛЕТЛĔХ

## ТĔРĔСЛЕВ ĔÇĔСЕМ

Психологипе педагогика факультечĕн
кĕрстсĕр уйрăмĕнчи студентсем валли

Шупашкар 2006

ББК 81?635.1
Я 73
А 655

**Андреева Е.А., Денисова Т.В., Игнатьева В.И.** Чувашский язык и методика его преподавания. Учебно-методическое пособие для студентов II-IV курсов заочного отделения психолого-педагогического факультета. -- Чебоксары: Чувашгоспедуниверситет им. И.Я. Яковлева, 2006. – 57 с.

Печатается по решению ученого совета ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева».

Представлены материалы для контрольных, курсовых и дипломных работ по курсам «Чувашский язык» и «Теория и методика обучения чувашскому языку». Даны темы, вопросы, задания и методические указания по их выполнению. По каждой теме рекомендована литература.

Научный редактор: Л.П. Сергеев, доктор филол. наук, профессор.

ПРОВЕРЕНО
20 10

Рецензенты:
Артемьева Т.В., канд. пед. наук, доцент кафедры МПЧЯ ЧГПУ им. И.Я. Яковлева;
Доброва Н.В., канд. филол. наук, доцент кафедры МПЧЯиЛ ЧГУ им. И.Н. Ульянова;
Павлов В.В., канд. филол. наук, доцент кафедры чувашского языка ЧГПУ им. И.Я. Яковлева.

© Андреева Е.А., Денисова Т.В., Игнатьева В.И., 2006
© ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева», 2006

Национальная библиотека Чувашской Республики

ч - 40003

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИПЕ ÇЫРМАЛЛИ ТĔРĔСЛЕВ ĔÇĔСЕМ

Вĕренӳ планĕ тăрăх, педагогикăпа психологи факультечĕн кĕретсĕр уйрăмĕнче вĕренекенсем чăваш чĕлхипе тĕрĕслев ĕçĕсем çыраççĕ.

Тĕрĕслев ĕçĕсен тĕллевĕ – студентсем чăваш чĕлхи лекцийĕсене çӳресе, харпăр хăй тĕллĕн вуласа тупнă пĕлĕве, теори материалне практика ĕçĕпе мĕнле çыхăнтарма пĕлнине тĕрĕслесси. Çавăнпа пĕрлех тĕрĕслев ĕçĕ чĕлхе ыйтăвĕсемпе çырнă литературăна вулама, вуланă материала конспектлама, кĕнекесемпе статьясен библиографине çырма пĕлнине те кăтартать.

Пособие кĕртнĕ тĕрĕслев ĕçĕсем чĕлхе пĕлĕвĕн уйрăм пайĕсемпе çыхăннă. Вĕсене çапла йĕркеленĕ: ыйтусене хуравласси тата ĕçсене пурнăçласси. Ыйтусем хыççăн вĕсене хуравлама пулăшакан литература списокне панă. Ĕçсене пурнăçланă чухне çырса панă методика кăтартăвĕсене шута илмелле. Вĕсене пăхăнни ĕçĕн пахалăхне ӳстерĕ.

Тĕрĕслев ĕçĕсене пĕрлештерекенни – илемлĕ литература произведенийĕсенчен çырса илнĕ пĕр страницăллă çыхăнуллă текст. Унăн айне, скобкăра, авторне, произведени ятне, кĕнеке страницине кăтартмалла.

Тĕслĕхрен, *Яла вĕсем анкартп хыçĕпе пĕр ансăр тăкăрлăкпа пырса кĕчĕç* (Л.Агаков «Ылтăн вăчăра», 120-мĕш страница).

Тĕрĕслев ĕçне уйрăм тетрадьре пурнăçламалла. Титул листине 4-мĕш страницăра кăтартнă пек йĕркелемелле. Ĕçсене тетрадь листин пĕр енне кăна йĕркипе çырмалла, уйрăм пайсене ылмаштарма е пăтраштарма юрамасть. Малтан ĕçĕн условине, ун хыççăн хуравне памалла. Ĕçе орфографипе пунктуаци правилисене пăхăнса тирпейлĕ те таса çырма тăрăшмалла.

Раççей Федерацийĕн Вĕрентÿпе ăслăлăх министерстви
Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентÿ учрежденийĕ
«И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

Чăваш чĕлхи кафедри

Психологипе педагогика факультетĕнче
II курсра кĕретсĕр уйрăмра вĕренекен Петрова Анна Петровнăн
чăваш чĕлхипе çырнă тĕрĕслев ĕçĕ

Студент адресĕ:
429401 Чăваш Республики,
Вăрмар районĕ,
Мăнçырма ялĕ,
Гагарин урамĕ, 8-мĕш çурт.

Шупашкар 2006

# *ЛЕКСИКОЛОГИ. ФРАЗЕОЛОГИ. ЛЕКСИКОГРАФИ*

## Аса илмелли ыйтусем

1. Мĕн вăл лексика тата лексикологи?
2. Мĕнле сăмахсене пĕр пĕлтерĕшлĕ сăмахсем теççĕ?
3. Мĕнле сăмахсене нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем теççĕ?
4. Куçăмлă пĕлтерĕш мĕнле мелсемпе пулса пырать?
5. Мĕн вăл метафора, метоними тата синекдоха?
6. Мĕнле сăмахсене омонимсем теççĕ?
7. Мĕн вăл синоним, синонимсем мĕнлисем пулаççĕ?
8. Мĕн вăл антоним, антонимсем мĕнлисем пулаççĕ?
9. Мĕн вăл лексика кальки?
10. Мĕн вăл диалектизм, вĕсем мĕнлисем пулаççĕ?
11. Мĕн вăл активлă тата пассивлă лексика?
12. Вариантлă сăмахсем, вĕсен тĕсĕсем?
13. Ономастика, унăн тĕп пайĕсем?
14. Мĕн вăл фразеологизм, вĕсен тĕсĕсем?
15. Мĕн вăл лексикографи? Словарьсем мĕнлисем пулаççĕ?

## Усă курмалли литература


1. *Андреев Н.А.* Чăваш чĕлхин лексикологийĕ. – Шупашкар, 1961.

2. *Горшков А.Е.* Чăваш чĕлхи лексикин аталанăвĕ. – Шупашкар, 1960.

3. *Сергеев Л.П., Котлеев В.И.* Чăваш чĕлхи. Пуçламăш шкул учителĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли. – Шупашкар, 1993.

4. *Чернов М.Ф.* Фразеология современного чувашского языка. – Чебоксары, 1985.

5. *Чернов М.Ф.* Чувашские словари. Пособие для студентов. – Чебоксары, 1992.


## Ĕçсем

1. Çырса илнĕ текстра куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупăр, вĕсем мĕнле майпа (метафора, метоними, синекдоха) куçăмлă пĕлтерĕш йышăннине калăр.

2. Текстра синоним, антоним тата омоним пулакан сăмахсене тупăр, вĕсене тĕслĕхсемпе çирĕплетĕр. Синонимсем тата омонимсем мĕнле майпа пулнине ăнлантарăр. Текста грамматика синонимĕсем кĕртĕр те предложенисене тытăмне улăштарса çырăр.

3. Текстра калькăсем, диалектизмсем, вариантлă сăмахсем пур-и? Вĕсене çырăр, пĕлтерĕшĕсене ăнлантарăр.

4. Хăвăр ялти хушаматсене мĕнле пулнине кура ушкăнласа çырăр.

5. Текстри пассивлă лексика тĕслĕхĕсене тупăр, вĕсен пĕлтерĕшĕсене «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» словарьпе усă курса ăнлантарăр.

6. Çырса илнĕ текстри фразеологизмсене тупăр, вĕсен пĕлтерĕшне, тытăмĕпе пулăвне ăнлантарса парăр. Текстра фразеологизмсем пулмасассăн чăваш чĕлхин тĕрлĕ словарĕсемпе усă курса «паллă ячĕ – япала ячĕ» тытăмлă 10 фразеологизм çырăр, вĕсен пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

7. Чăваш чĕлхин филологи словарĕсен картотекине тăвăр. Пĕрпĕр словаре илсе унăн тытăмне ăнлантарăр, словарĕн пĕлтерĕшне палăртăр.

## Методика кăтартăвĕсем

*1-мĕш ĕç*

Ку ĕçĕн тĕллевĕ – сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшĕсене «Чăвашла-вырăсла словарьте» шыраса тупма пĕлесси. Студент текстра словарьпе усă курса нумай пĕлтерĕшлĕ сăмах шыраса тупать. Кайран вара çав нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшĕсене палăртмалла, вĕсем е метафора, е метоними, е синекдоха мелĕпе пулнине каламалла.

*2-мĕш ĕç*

Ку ĕç сăмахсене пĕлтерĕш тăрăх ушкăнлассипе çыхăннă. Студентăн текстра синоним, антоним, омоним пулакан сăмахсене шыраса тупмалла. Тĕслĕхрен, текстра *пăс, сак, тӳрĕ* сăмахсем пулсассăн вĕсене çапла çырма юрать.

**Пăс** – омоним пулакан сăмах: **пăс** I (пар), **пăс** II (ломать). Тĕрлĕ пуплев пайне кĕрекен сăмахсем пĕр пек илтĕнеççĕ.

**Сак** сăмахăн синонимĕ – **тенкел**. *Сарлака сак. Вăрăм тенкел.* Пĕр япалана пĕлтерекен сăмахсем.

**Тӳрĕ** сăмахăн антонимĕ – **кукăр**. *Тӳрĕ пăта – кукăр пăта.*

Текстри пĕр-пĕр формăна грамматика синонимĕпе улăштарни пуплеве витĕмлĕ тумалли мел. Тĕслĕхшĕн çак предложенисене илсе пăхар.

*Эпĕ хытă ывăннă, выртсанах çывăрса кайнă.*

*Хытă ывăннăскер, эпĕ выртсанах çывăрса кайнă.*

*3-мĕш ĕç*

Текстра диалект сăмахĕсем, калькăсем тата вариантлă сăмахсем, паллах, пур чухне те пулмаççĕ. Çавăнпа студентăн унти сăмахсене хăй ялĕнче каланипе танлаштарса пăхмалла. Тĕслĕхрен, текстра *тутăр* сăмах пур тейĕпĕр. Пĕрисем калаçăвĕнче çак ăнлава *тутăр*, теприсем *явлăк* сăмахпа пĕлтерме пултараççĕ. Студентăн хăй ялĕнче

мĕнле калаççĕ, çавăн пек çырса кăтартмалла. *Пирĕн ялта тутăр вырăнне явлăк теççĕ. Вăл лексика диалектизмĕ пулать.*

*4-мĕш ĕç*

Ку ĕç студент ономастикăна мĕнле пĕлнине кăтартса парать, çав вăхăтрах антропонимсем мĕнле пулнине тишкерме майсем тăвать. Тĕслĕхрен, *Петров* хушамат çын ятĕнчен, *Козлов* – выльăх-чĕрлĕх ятĕнчен пулни курăнать.

*5-мĕш ĕç*

Ку хăнăхтарăва пурнăçланă май студент чĕлхери сайра усă куракан сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланма пултарать, студентăн лексики пуянланать.

*6-мĕш ĕç*

Ĕçе тĕрĕс пурнăçлама фразеологизм мĕн иккенне, унăн тытăмĕпе пулăвне аса илмелле.

*7-мĕш ĕç*

Çак ĕçе пурнăçлани студента чăваш лексикографийĕн çитĕнĕвĕсемпе паллашма май парать, кашни словаре алла илсе пăхма хистет, çав вăхăтрах унăн уйрăмлăхне, пĕлтерĕшне курма пулăшать.

## ФОНЕТИКА. ОРФОЭПИ. ГРАФИКА. ОРФОГРАФИ

### Аса илмелли ыйтусем

1. Мĕн вăл фонетика, вăл сасăсене миçе енчен тишкерет?
2. Мĕн вăл сыпăк сингармонизмĕ? Мĕн вăл усă сасăсен рет килĕшĕвĕ?
3. Уçă сасăсен системи (вокализм).
4. Хупă сасăсен системи (консонантизм).
5. Мĕн вăл сыпăк? Сыпăксем мĕнлисем пулаççĕ?
6. Мĕн вăл пусăм? Чăваш сăмахĕсенчи пусăм вырăнĕ.
7. Мĕн вăл орфоэпи? Чăваш чĕлхинчи сăмахсемпе вĕсен формисене калас уйрăмлăхсем.
8. Мĕн вăл графика тата орфографи?
9. Чăваш чĕлхин орфографи правилисене аса илĕр.

## Усă курмалли литература


*Фонетика*

1. *Котлеев В.И.* Система гласных фонем чувашского языка // Ученые записки ЧНИИ. – Вып. 26. – Чебоксары, 1963.
2. *Котлеев В.И.* Чăваш чĕлхин сасă тытăмĕ. – Шупашкар, 1981.
3. *Сергеев Л.П., Котлеев В.И.* Чăваш чĕлхи. – Шупашкар, 1993.
4. *Хальхи* чăваш чĕлхин фонетики, графики тата орфографийĕ. – Шупашкар, 1978.

*Орфоэпи*

1. *Горшков А.Е.* Чăваш орфоэпийĕн хăш-пĕр ыйтăвĕсем // Чувашский язык, литература и фольклор. – Чебоксары, 1972. – Вып. 1. – С. 112–136.
2. *Горшков А.Е.* Чăваш чĕлхин кĕске орфоэпи словарĕ // Чĕлхе культурин ыйтăвĕсем. 2-мĕш кĕнеке. – Шупашкар, 1972.

*Графика тата орфографи*

1. *Андреев И.А.* Орфография и язык // Ученые записки ЧНИИ. – Вып. 22. – Чебоксары, 1966.
2. *Горский С.П.* Краткая история чувашской орфографии // Ученые записки ЧНИИ. – Вып. 7. – Чебоксары, 1953.
3. *Петров Н.П.* История чувашской графики // Ученые записки ЧНИИ. – Вып. 34. – Чебоксары, 1967.
4. *Чăваш* орфографийĕпе пунктуацийĕ. – Шупашкар, 1967.
5. *Чăваш* чĕлхин орфографи словарĕ. – Шупашкар, 2002.


## Ĕçсем

1. Çырса илнĕ текста транскрипцилĕр. Текстран сингармонизм законĕ пăсăлнине кăтартакан 4-5 тĕслĕх çырса илĕр. Мĕне пула сингармонизм пăсăлнине кăтартса парăр. Текстра мĕнле фонетика пулăмĕсем (улшăну, ылмашу) пур?
2. Текстри вiçĕ сăмаха фонетикăпа графика тишкерĕвĕ тăвăр.
3. Текстри сăмахсене орфографин хăш принципне пăхăнса çырнине ăнлантарăр.

## Методика кăтартăвĕсем

*1-мĕш ĕç*

Тĕрĕслев ĕçне пурнăçлама транскрипцие лайăх пĕлни кирлĕ. Урăхла каласан, транскрипци тунă чухне сасăсене мĕнле палăртмалли йĕркене пăхăнмалла.

*2-мĕш ĕç*

Ку ĕç студент чăваш чĕлхин фонетикине пĕтĕмĕшле ăша мĕнле хывнине кăтартать. Фонетикăпа графика тишкерĕвне çакăн пек йĕркепе тумалла.

Тĕслĕхрен, *тăрнасем* сăмаха илер.

***Тăрнасем*** [търназэм'] - 8 сасă, 8 сас палли. Виçĕ сыпăк: тър-на-зэм'. Пусăм 3-мĕш сыпăк çине ÿкет.

***тър*** - витĕнтернĕ хупă сыпăк, сыпăк сингармонизмĕ пăсăлман.

***на*** - витĕнтернĕ уçă сыпăк, сыпăк сингармонизмĕ пăсăлман.

***зэм'*** - витĕнтернĕ хупă сыпăк, сыпăк сингармонизмĕ пăсăлнă, мĕншĕн тесен [з] ялан хытă хупă сасă, [э] тата [м'] çемçе сасăсем.

Сăмахра уçă сасăсен рет килĕшĕвĕ çук.

***т [т]*** - хупă фонема, чĕлхе тÿрчĕн малти пайĕпе калакан, шавлă, питĕрĕнчĕк, янăраман, кĕске, хытă хупă сасă.

***ă [ъ]*** - уçă фонема, вăта ретри, вăта пусăмри, тутапа каламан уçă сасă.

***р [р]*** - хупă фонема, чĕлхе тÿрчĕн малти пайĕпе калакан, янăравлă, чĕтренчĕк, кĕске, хытă хупă сасă.

***н [н]*** - хупă фонема, чĕлхе тÿрчĕн малти пайĕпе калакан, янăравлă, çурма питĕрĕнчĕк, кĕске, хытă хупă сасă.

***а [а]*** - уçă фонема, вăта ретри, аялти пусăмри, тутапа каламан уçă сасă.

***с [з]*** - хупă фонема, чĕлхе тÿрчĕн малти пайĕпе калакан, шавлă, хĕсĕнчĕк, янăракан, кĕске, ялан хытă хупă сасă.

***е [э]*** - уçă фонема, малти ретри, вăта пусăмри, тутапа каламан уçă сасă.

***м [м']*** - фонемоид, тутапа калакан, янăравлă, çурма питĕрĕнчĕк, кĕске, çемçе хупă сасă.

*3-мĕш ĕç*

Ку ĕçе пурнăçламашкăн чăваш орфографийĕ мĕнле принципсем çинче никĕсленнине пĕлмелле. Тĕслĕхрен, текстра *тăвайкки, çурт, чаватпăр* сăмахсем пур. Вĕсене çапла ăнлантармалла:

*тăвайкки* - традици принципĕ;

*çурт* - фонема принципĕ;

*чаватпăр* (чаваппăр) - морфологи принципĕ.

## *МОРФЕМИКА. СĂМАХ ПУЛĂВĔ. МОРФОНОЛОГИ*

### Аса илмелли ыйтусем

1. Мĕн вăл морфема? Морфемăсем мĕнлисем пулаççĕ?
2. Мĕн вăл аффикс? Аффикссем мĕнлисем пулаççĕ?
3. Сăмах тымарĕпе сăмах тĕпĕ. Çыхăнчăк тымарсем.
4. Чăваш чĕлхинче çĕнĕ сăмахсем мĕнле мелсемпе пулаççĕ?

### Усă курмалли литература

1. *Сергеев Л.П., Котлеев В.И.* Чăваш чĕлхи. – Шупашкар, 1993.

2. *Сергеев В.И.* Морфемика тата морфонологи. – Шупашкар, 2001.

### Ĕçсем

1. Текстран çакăн пек тытăмлă 10-шар сăмах çырса илĕр: **УХ, ХУ, УХХ, ХУХХ, ХУХ**. Кашни ушкăнĕнчи пĕрер сăмахĕпе предложени тăвăр.

2. Çак тымарсенчен çĕнĕ сăмахсем тăвăр: *кур* (видеть), *тав* (спор), *сăн* (облик, изображение).

3. Хайлавран морфологи, лексикăпа синтаксис мелĕпе пулнă сăмахсемпе предложенисем тупса çырăр. Сăмахсен пулăвне ăнлантарăр. 4. Çак тĕслĕхсене сăмах тытăмĕн тишкерĕвĕ тăвăр: *чупкăнсенче, кукăрăлчăк, мăнтăрлантар.*

### Методика кăтартăвĕсем

*1-мĕш ĕç*

Ку ĕç чăваш чĕлхинчи тымар сăмахсен тытăмне ас туса юлма пулăшать.

*2-мĕш ĕç*

Кунта çĕнĕ сăмах тумалли мелсене пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ĕçе тĕплĕн пурнăçлас тесен 1982 çулта Мускаврa пичетленнĕ «Чăвашла-вырăсла словарьпе» усă курмалла.

*3-мĕш ĕç*

Чăваш чĕлхинчи сăмахсем тумалли мелсем çинчен мĕн пĕлнине тĕслĕхсемпе çирĕплетесси - çак ĕçĕн тĕллевĕ. Тĕслĕхсене мĕнле кĕнекерен илнине, унăн авторне тата страницине кăтартмалла. Унтан иккĕмĕшле сăмахсен пулăвне ăнлантармалла. Ĕçе çапла йĕркелемелле *(пухура* сăмахăн пулăвне ăнлантарни).

1) ***пухура*** - тĕп чăваш сăмахĕ;
2) сăмах тĕпĕ - ***пуху;***

3) *Пуху* - иккĕмĕшле сăмах; морфологи мелĕпе пулнă: *пух+у; -у* - тухăçлă аффикс, вăл хушăнса пулнă сăмахсем чăваш чĕлхинче йышлă: *ухтару, шану, лару, ăсату*.

*4-мĕш ĕç*

Палăртнă сăмахсене морфемăсем çине пайламалла, кашни морфемăна пĕр-пĕринчен дефиспа уйăрса çырас пулать. Ун хыççăн аффикссен пĕлтерĕшĕсене кăтартмалла. Сăмах тытăмĕн тишкерĕвĕн йĕрки:

1) пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах, мĕнле пуплев пайне кĕрет?

2) сăмах тĕпĕ, унăн пайĕсем хăшĕсем?

3) сăмах тымарĕ (хурава çак тымартан пулнă ытти сăмахсемпе çирĕплетсе памалла);

4) сăмах тăвакан аффикссем хăшĕсем (хурава çак аффикссем хушăннипе пулнă ытти сăмахсемпе çирĕплетсе памалла)?

5) сăмаха улăштаракан аффикссем хăшĕсем (хурава çав аффикслă ытти сăмахсемпе çирĕплетсе памалла)?

6) форма тăвакан аффикссем хăшĕсем, вĕсен пĕлтерĕшĕсем мĕнле?

*Пухура* сăмах тытăмĕн тишкерĕвĕ

1. Япала ячĕ, иккĕмĕшле сăмах.

2. Сăмах тĕпĕ - *пуху*. Çакăн пек морфемăсем çине пайланать: *пух-у*.

3. Сăмах тымарĕ – ***пух***. Ку тымартан пулнă сăмахсем: *пухă* (япала ячĕ), *пухмач* (япала ячĕ), *пухăн* (глагол).

4. Сăмах тăвакан ***-у*** аффикс. Ку аффикс хушăнса пулнă иккĕмĕшле сăмахсем нумай. ***-у*** - япала ячĕ тăвакан аффикс, вăл ĕçĕн ятне е результатне кăтартать: *хушу, шану, ухтару, çыхăну*.

5. Сăмаха улăштаракан ***-ра*** аффикс. Вăл вырăн падежĕн аффиксĕ: *урара, ачара, çынра*.

## *МОРФОЛОГИ*

### Ыйтусем

1. Мĕн вăл морфологи? Вăл мĕне тĕпчет?

2. Пуплев пайĕсем, вĕсене палăртмалли принципсем.

3. Япала ячĕсем, вĕсен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем тата синтаксис уйрăмлăхĕсем.

4. Япала ячĕсен категориллĕ тата категорисĕр формисем.

5. Паллă ячĕсен морфологи паллисем тата синтаксис уйрăмлăхĕсем. Паллă ячĕсен грамматика формисем.

6. Хисеп ячĕсен шут, йĕрке, валеçӳ, пĕтĕмлетӳ, валеçӳ-пĕтĕмлетӳ тата сăпат формисем.

7. Местоименисен пĕлтерĕшĕ, ушкăнĕсем. Тĕрлĕ ушкăнри местоименисен морфологипе синтаксис уйрăмлăхĕсем.

8. Глагол, унăн сăпатлă формисем.

9. Глаголăн сăпатсăр формисем: инфинитив, причасти, деепричасти.

10. Наречисен пĕлтерĕшĕ, морфологи паллисем тата синтаксис уйрăмлăхĕсем.

11. Евĕрлев сăмахĕсен пĕлтерĕшĕсем, синтаксис уйрăмлăхĕсем. Евĕрлев сăмахĕсен ушкăнĕсем тата сасă тытăмĕ.

12. Пулăшу сăмахĕсем: хыç сăмахсем, союзсем, татăксем. Пулăшу сăмахĕсен уйрăмлăхĕсем, вĕсен грамматикăри вырăнĕ.

13. Междометисем, вĕсене пĕлтерĕшне кура ушкăнлани.

## Усă курмалли литература


1. *Материалы* по грамматике современного чувашского языка. – Ч.1. – Морфология. – Чебоксары, 1957.

2. *Павлов И.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхи. – Шупашкар, 1965.

3. *Сергеев В.И.* Хальхи чăваш чĕлхи. Морфологи. – Шупашкар, 1992.

4. *Сергеев Л.П., Котлеев В.И.* Чăваш чĕлхи. – Шупашкар, 1993.

5. *Сергеев Л.П., Андреева Е.А.* Чăваш чĕлхи. Справочник. – Шурашкар, 2004.

6. *Сергеев Л.П.* Глагол. – Шупашкар, 2004.

7. *Сергеев Л.П.* Япала ячĕ. – Шупашкар, 2004.

8. *Сергеев Л.П.* Паллă ячĕ. Хисеп ячĕ. Местоимени. – Шупашкар, 2004.

9. *Сергеев Л.П.* Наречи. – Шупашкар, 2004.


## Ĕçсем

1. *Анне, куллă, кĕтӳ* сăмахсене камăнлăх категорийĕнче сăпатлăр.

2. *Ăмăрту, çӳпĕ, хĕвел, вăл, ху, хăш-пĕр* сăмахсене пĕрреллĕ хисепре вĕçлĕр.

3. Çырса илнĕ текстран кашни пуплев пайне кĕрекен икшер сăмаха схемăпа усă курса морфологи тишкерĕвĕ тăвăр.

4. *Шӳ, тĕркс, тăхта* глаголсене хальхи, пулас, темиçе иртнĕ вăхăтра сăпатлăр. *Шӳ* глаголăн сăпатлă тата сăпатсăр формисене май килнĕ таран нумайрах çырăр.

## Методика кăтартăвĕсем

*1-мĕш ĕç*

Кăтартнă япала ячĕсене камăнлăх форминче сăпатламалла. Ĕçе пурнăçланă чухне камăнлăх формин тăватă тĕсне те шута илмелле. Сăпатланă чухне морфемăсен чиккинче пулса иртекен тĕрлĕ улшăнусене ăнлантарса çырмалла.

*2-мĕш ĕç*

Асăннă сăмахсене пĕрреллĕ хисепре вĕçлемелле. Мĕнле уйрăмлăхсем пуррине ăнлантармалла.

*3-мĕш ĕç*

Панă глаголсене пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре çирĕплетӳ тата хирĕçлев аспекчĕсене сăпатламалла.

*Шӳ* глаголăн сăпатлă тата сăпатсăр формисене çырмалла. Тĕслĕхрен, *шӳ* - *шӳсе* (деепричасти); *шӳ* - *шĕвем* (хушу накл., çирĕплетӳ асп., пĕр. хис., 1 сăп.).

*4-мĕш ĕç*

Текста хуть мĕнле хайлавран та илме юрать. Унта кашни пуплев пайĕнчи сăмах пулсассăн аван. Анчах та пур чухне те кашни пуплев пайĕ пулмасть. Текстри кашни пуплев пайĕнчи икшер сăмаха тишкерӳ тумалла. Енчен те текстра пĕр-пĕр пуплев пайĕпе сăмахсем çук пулсан илемлĕ литературăран çав пуплев пайĕсемпе предложени çырса илмелле, тишкерӳ тумалла.

## *Пуплев пайĕсене тишкермелли йĕрке*

**Япала ячĕ.** Пуплев пайĕ. Пайăр е пайăр мар ят. Сăмах тĕпĕ. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах. Иккĕмĕшле сăмах пулăвĕ. Камăнлăх форми а) сăпат, б) хисеп. Япала ячĕн хисепĕ. Падеж. Ытти формăсем (пур пулсан).

**Паллă ячĕ.** Пуплев пайĕ. Сăмах тĕпĕ. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах. Иккĕмĕшле сăмах пулăвĕ. Хăш формăра (танлаштаруллă е вăйлă)? Палăрту форми (пур пулсан). Палăрту форминчи паллă ячĕсен хисепĕ, падежĕ. Ытти формăсем (пур пулсан).

**Хисеп ячĕ.** Пуплев пайĕ. Пĕр сăмахран е сăмахсен çыхăнăвĕнчен тăрать. Тулли е вак хисеп ячĕ. Форма тăрăх хăш ушкăна кĕрет? Сăпат (пур пулсан). Хисеп. Падеж. Ытти формăсем (пур пулсан).

**Местоимени.** Пуплев пайĕ. Сăмах тĕпĕ. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмах. Иккĕмĕшле сăмах пулăвĕ. Хăш ушкăна кĕрет? Хăш пуплев пайĕ вырăнне усă курнă? Сăпат. Хисеп. Падеж. Ытти формăсем (пур пулсан).

**Глагол.** Пуплев пайӗ. Глагол тӗпӗ. Пӗрремӗшле е иккӗмӗшле сӑмах. Аспект (ҫирӗплетӳ, хирӗҫлев, пултараслӑх, пултарайманлӑх). Сӑпатлӑ форма (наклонени, вӑхӑт, сӑпат, хисеп). Сӑпатсӑр глагол:

Инфинитив.

Причасти. Анлӑ е сайра усӑ куракан причасти. Палӑрту форми. Наклонени, вӑхӑт, сӑпат, хисеп, падеж (пур пулсан)

Деепричасти. Мӗнле аффикспа пулнӑ? Пӗлтерӗшӗ.

**Наречи.** Пуплев пайӗ. Сӑмах тӗпӗ. Пулӑвӗ тӑрӑх мӗнле сӑмах (пӗрремӗшле е аффикс хушӑннӑ сӑмахсен форми ҫирӗпленсе (хытса) ларнипе пулнӑ)? Пӗлтерӗшӗ тӑрӑх хӑш ушкӑна кӗрет? Ытти формӑсем (пур пулсан).

**Еверлев сӑмахӗ.** Пуплев пайӗ. Мӗне еверлет - сасса е сӑнлӑха?

**Хыҫсӑмах.** Пуплев пайӗ. Пӗлтерӗшӗ. Мӗнле падеж форми хыҫҫӑн тӑрать.

**Союз.** Пуплев пайӗ. Сыпӑнуллӑ е пӑхӑнуллӑ союз. Пӗлтерӗшӗ тӑрӑх хӑш ушкӑна кӗрет: а) сыпӑнтару, уйӑру е хирӗҫлев; ӑ) пирке, тӗллев, услови, тӗллевпе услови, килӗшӳ?

**Татӑк.** Пуплев пайӗ. Пӗлтерӗш тӑрӑх хӑш ушкӑна кӗрет: а) сӑмах пӗлтерӗшне урӑхлатаканни, сӑмах тӑваканни, форма тӑваканни; ӑ) модальлӗх, ҫӗнӗ пӗлтерӗш сӗмне хушакан татӑк, эмоципе экспресси татӑкӗ?

**Междомети.** Пуплев пайӗ. Хӑш ушкӑна кӗрет?

## *СИНТАКСИС*

### I. Сӑмах майлашӑвӗ

1. Илемлӗ литература произведенийӗнчен пӗр анлӑ хутсӑр предложени ҫырса илӗр, произведенин авторне, ятне, ӑна ӑҫта тата хӑҫан пичетленинине, страницине кӑтартӑр.

Ҫырса илнӗ предложенирен малтан ансӑр, унтан анлӑ сӑмах майлашӑвӗсене тупса палӑртӑр.

Ансӑр сӑмах майлашӑвӗсене пурне те, чи анлӑ ят тата глагол сӑмах майлашӑвӗсене пӗрер тишкерӗр.

Сӑмах майлашӑвне тишкермелли йӗрке.

1) Сӑмах майлашӑвӗн пуҫламӑш форми

2) Тӗп тата пӑхӑнакан сӑмахсем. Вӗсем хӑш пуплев пайне кӗреҫҫӗ?

3) Сӑмах майлашӑвӗ ансӑр е анлӑ?

4) Тӗп сӑмахне кура хӑш ушкӑна кӗрет?

5) Пӑхӑнакан сӑмахӗ (пайӗ) тӗп сӑмахпа (пайпа) мӗнпе ҫыхӑннӑ?

6) Сӑмах майлашӑвӗн пӗлтерӗшӗ.

7) Синтаксис енчен пайланать е пайланмасть?

**Тишкерӳ тĕслĕхĕсем**

*Часах вăл шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ.* (Ю.Скворцов. Сарă кунсем е Аделина.)

Ку предложенири **ансăр сăмах майлашăвĕсем:** *çитсе чарăнчĕ, пӳрт умне, пĕчĕк пӳрт, шуратнă пӳрт, тăмпа шуратнă, шурă тăмпа, часах чарăнчĕ.*

**Анлă сăмах майлашăвĕсем:** *часах çитсе чарăнчĕ, часах пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, часах пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, часах шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, часах тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, часах шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ, шурă тăмпа шуратнă, шуратнă пĕчĕк пӳрт, пĕчĕк пӳрт умне, шуратнă пĕчĕк пӳрт умне, шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне.*

**Ансăр сăмах майлашăвĕсене тишкерни**

Мĕнле?
┌────▼ х
*Çитсе чарăнчĕ*

Пуçламăш форма: *çитсе чарăн.* Тĕп сăмахĕ – *чарăн* (гл.), пăхăнаканни - *çитсе* (гл., деепр.). Ку ансăр глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Мĕн?
┌────▼ х
*Пӳрт умне*

Пуçламăш форма: *пӳрт умĕ.* Тĕп сăмахĕ – *умĕ* (я.я.), пăхăнаканни – пӳрт (я.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе тата камăнлăх категорийĕн (-ĕ) аффиксĕпе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланмасть.

Мĕнле?
┌────▼ х
*Пĕчĕк пӳрт*

Сăмах майлашăвĕ пуçламăш формăра. Тĕп сăмахĕ – *пӳрт* (я.я.), пăхăнаканни – *пĕчĕк* (п.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Мĕнле?

x

*Шуратнă пӳрт*

Пуçламăш формăра. Тĕп сăмахĕ – *пӳрт* (я.я.), пăхăнаканни – *шуратнă* (гл., прич.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Мĕнпе?

x

*Тăмпа шуратнă*

Пуçламăш форма: *тăмпа шурат.* Тĕп сăмахĕ – *шурат* (гл.), пăхăнаканни – *тăмпа* (я.я.). Ку ансăр глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа пĕрлелĕх падежĕн –па аффиксĕпе çыхăннă, дополнени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Мĕнле?

x

*Шурă тăмпа*

Пуçламăш форма: *шурă тăм.* Тĕп сăмахĕ – *тăм* (я.я.), пăхăнаканни – *шурă* (п.я.). Ку ансăр ят сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

Хăçан?

x

*Часах чарăнчĕ*

Пуçламăш форма: *часах чарăн.* Тĕп сăмахĕ – *чарăн* (гл.), пăхăнаканни – *часах* (нар.). Ку ансăр глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан сăмахĕ тĕп сăмахпа вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

**Анлă сăмах майлашăвĕсене тишкерни**

1 2 3 4 5 6 7 8 9

*Часах шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăнчĕ*



Пуçламăш форма: *часах шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăн.* Тĕп пайĕ – *шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пӳрт умне çитсе чарăн* (хăй анлă глагол сăмах майлашăвĕ пулать), пăхăнаканни – *часах.* Ку анлă глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан пайĕ тĕп пайĕпе вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.




Пуçламăш форма: *шурă тăмпа шуратнă пĕчĕк пўрт умĕ.* Тĕп пайĕ – *пĕчĕк пўрт умĕ* (анлă ят сăмах майлашăвĕ), пăхăнаканни – *шурă тăмпа шуратнă.* Ку анлă глагол сăмах майлашăвĕ, пăхăнакан пайĕ тĕп пайĕпе вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, определени пĕлтерĕшлĕ, синтаксис енчен пайланать.

### Усă курмалли литература

1. *Андреев И.А.* Хальхи чăваш чĕлхи. Синтаксис. – Шупашкар, 2005. – 36–53 с.

2. *Андреев И.А.* Чăваш чĕлхи: Синтаксис. 8-9 классем валли. – Шупашкар, 2001. – 11-31 с.

3. *Андреев И.А.* Структура именных синтагм в чувашском языке //УЗ ЧНИИ. – Вып. 39. – С. 78-99.

4. *Горский С.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхин синтаксисĕ. – Шупашкар, 1970.

5. *Лекци* материалĕ.

## II. Хутсăр предложени

1. Илемлĕ литература произведенийĕнчен икĕ составлă, анлă хутсăр предложени çырса илĕр, ăна пĕтĕмĕшле хак парăр, тулли синтаксис тишкерĕвĕ тăвăр.

### Хутсăр предложение пĕтĕмĕшле хак памалли йĕрке

1) Предложени хутсăр пулнине палăртăр, тĕп членĕсене тупăр.

2) Каланин тĕллевне кура хăш ушкăна кĕрет?

3) Кăмăл-туйăм енчен мĕнле предложени (кăшкăруллă е кăшкăруллă мар) пулать?

4) Çирĕплетекен е хирĕçлекен предложени?

5) Тытăмĕ енчен предложени хăш ушкăна кĕрет:

а) икĕ е пĕр составлă (тĕссĕ);

ă) ансăр е анлă;

б) тулли е тулли мар.

Ч-40003
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

6) Предложени мĕнпе (пĕр йышши е уйрăм тăран членсемпе, кӳртĕм сăмахсемпе е предложенисемпе, обращенипе) кăткăсланнă?

7) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр.

8) Предложение членсем тăрăх туллин тишкерĕр.

### Тишкерӳ тĕслĕхĕсем

*Шурăмпуç çăлтăрĕ, пĕчĕкçĕ уйăх пек, симĕс мерчен пайăркасем ярсах çутатать (Ю. Скворцов. Сарă кунсем е Аделина).*

Ку хутсăр (*çăлтăрĕ* – подлежащи, *çутатать* – сказуемăй), калуллă, кăшкăруллă мар, çирĕплетекен, икĕ составлă, анлă, тулли предложени. Вăл уйрăм тăран членпа (*пĕчĕкçĕ уйăх пек*) кăткăсланнă, ăна икĕ енчен запятойпа уйăрнă, мĕншĕн тесен танлаштару сăмахĕсем шухăш тăрăх хыççăнхи сăмахсемпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăннă.

Предложение тишкерессн тĕп членсенчен пуçланмалла, унтан подлежащи тата сказуемăй ушкăнне кĕрекен кĕçĕн членсене тишкермелле.

*Мĕн? – çăлтăрĕ* – подлежащи, тĕп падежри, пĕрреллĕ хисепри япала ятĕнчен пулнă.

*Çăлтăрĕ мĕн тăвать? – çутатать* – сказуемăй, кăтарту наклоненийĕнчи, хальхи вăхăтри, пĕрреллĕ хисепри, виççĕмĕш сăпатри глаголтан пулнă.

*Мĕн çăлтăрĕ? – шурăмпуç* - определени, тĕп падежри, пĕрреллĕ хисепри япала ятĕнчен пулнă.

*Мĕнле çутатать? – пайăркасем ярсах* – обстоятельство, япала ячĕпе глаголăн сăпатсăр форминчен, деепричастиран пулнă.

*Мĕнле пайăркасем? – мерчен* – определени, тĕп падежри, пĕрреллĕ хисепри япала ятĕнчен пулнă.

*Мĕнле мерчен? – симĕс* – определени, паллă ятĕнчен пулнă.

*Мĕнле çутатать? – пĕчĕкçĕ уйăх пек* – уйрăм тăран обстоятельство, паллă ячĕ, япала ячĕ тата хыç сăмах пĕрлешĕвĕнчен пулнă.

2. Илемлĕ литература произведенийĕнчен пĕр составлă предложенин кашни ушкăнĕпе (паллă мар сăпатлă, сăпатсăр, ят предложенисем) пĕрер предложени çырса илĕр, пĕтĕмĕшле хак парăр, тĕп членсене тупăр.

### Тишкерӳ тĕслĕхĕсем

*Тĕрĕссипе, Вассан хăйĕн те чăн-чăн пурнăçран юлас килмест* (В. Алентей).

Ку хутсăр, калуллă, кăшкăруллă мар, хирĕçлекен, пĕр составлă, сăпатсăр, анлă, тулли предложени. Кӳртĕм сăмахпа кăткăсланнă.

Вӑл предложени пуҫламӑшӗнче тӑрать, ҫавӑнпа ун хыҫҫӑн запятой лартнӑ.

Тӗп членӗ – *юлас килмест* – сказуемӑй, глаголӑн сӑпатсӑр формипе (причасти) сӑпатлӑ глагол пӗрлешӗвӗнчен пулнӑ.

*Вутта вӑйсӑр чух сӳнтерме хушнӑ* (Ватт. сӑм.).

Ку хутсӑр, калуллӑ, кӑшкӑруллӑ мар, ҫирӗплетекен, пӗр составлӑ, паллӑ мар сӑпатлӑ, анлӑ, тулли предложени. Вӑл нимӗнпе те кӑткӑсланман, чарӑну палли лартассипе ҫыхӑннӑ уйрӑмлӑхсем ҫук. Тӗп членӗ – *хушнӑ* – сказуемӑй, глаголӑн сӑптасӑр форминчен, иртнӗ причастирен пулнӑ.

*Чул хапха* (В. Алентей).

Ку хутсӑр, калуллӑ, кӑшкӑруллӑ мар, ҫирӗплетекен, пӗр составлӑ, ят, анлӑ, тулли предложени. Вӑл нимӗнпе те кӑткӑсланман, чарӑну палли лартассипе ҫыхӑннӑ уйрӑмлӑхсем ҫук. Тӗп членӗ – *хапха* – подлежащи, тӗп падежри япала ятӗнчен пулнӑ.

## Усӑ курмалли литература


1. *Андреев И.А.* Хальхи чӑваш чӗлхи. Синтаксис. – Шупашкар, 2005. – 56-201 с.
2. *Андреев И.А.* Сӑваш синтаксисӗн ыйтӑвӗсем. 1 пай. – Шупашкар, 1973. – 92-159 с.
3. *Андреев И.А.* Чӑваш чӗлхи: Синтаксис. 8-9 классем валли. – Шупашкар, 2001. – 34-138 с.
4. *Горский С.П.* Хальхи чӑваш литература чӗлхин синтаксисӗ. – Шупашкар, 1970.
5. *Чернов М.Ф.* Обособленные члены предложения в современном чувашском языке. – Чебоксары, 1963.
6. *Чӑваш* орфографийӗпе пунктуацийӗ / И.А. Андреев профессор редакцилен̆ӗ. – Шупашкар, 1991.


# III. Хутлӑ предложени

## 1. Сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени

Илемлӗ литература произведенийӗнчен сыпӑнтаракан, уйӑракан, хирӗҫлекен союзсемпе йӗркеленнӗ пӗрер сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени ҫырса илӗр, палӑртнӑ йӗркепе тишкерӗр.

### Сыпăнуллă хутлă предложение тишкермелли йěрке

1) Сыпăнуллă хутлă предложени пулнине калăр.

2) Миçе предикативлă пайран тăрать, вěсен предикативлă никěсěсем (тěп членěсем).

3) Предикативлă пайěсем мěнле союзпа çыхăннă?

4) Предикативлă пайěсем хушшинче мěнле пěлтерěш (шухăш) çыхăнăвě палăрать?

5) Предложени мěнпе кăткăсланнă?

6) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем.

### Тишкерӳ тěслěхěсем

*Кăнтăрла янкăр тăрă пěлěтре хěвел йăлтăртатать, анчах унăн ăшши иксěлнě ěнтě* (М.Трубина).

Ку сыпăнуллă хутлă предложени, икě предикативлă пайран тăрать (тěп членěсем: *хěвел йăлтăртатать, ăшши иксěлнě*). Предикативлă пайěсем *анчах* союзпа çыхăннă, вěсем хушшинче хирěçлев пěлтерěшě палăрать. Предложени нимěнпе те кăткăсланман. Сыпăнуллă хутлă предложенин пайěсене пěр-пěринчен (*анчах* союз умěн) запятой лартса уйăрнă.

Предложенин схеми: [ 1 ], анчах [ 2 ].

*Хурăн çинчен салакайăк чěвěлтетсе анчě те, пěчěк хăрăк турат хуçăлса кӳлле чăмрě* (П. Афанасьев).

Ку сыпăнуллă хутлă предложени, икě предикативлă пайран тăрать (тěп членěсем: *салакайăк анчě, турат чăмрě*). Предикативлă пайěсем *те* союзпа çыхăннă, вěсем пěр ěç хыççăн тепри пулса иртнине сăнлаççě. Сыпăнуллă хутлă предложенин пайěсене пěр-пěринчен запятой лартса уйăрнă.

### Пайěсем тěрлě çыхăнура тăракан сыпăнуллă хутлă предложени

Илемлě литература хайлавěнчен пайěсем тěрлě çыхăнура тăракан пěр сыпăнуллă хутлă предложени çырса илěр (хайлав авторне, ятне, тěслěхе хăш страницăран илнине кăтартăр), палăртнă йěркепе тишкерěр, схемине ӳкерěр.

### Тишкерӳ йěрки

1) Предложени миçе предикативлă пайран тăрать? Пайěсенчи тěп членсене тупăр. Предложени тěсне калăр.

2) Предложени шухӑшӗ енчен мӗнле пайланать? Пайӗсем пӗр-пӗринпе мӗнпе ҫыхӑнаҫҫӗ?

3) Шухӑшӗ енчен уйрӑлакан пайсем хӑйсем мӗнле предложенисем пулаҫҫӗ? Вӗсене кашнине тишкерӗр.

4) Предложени пӗтӗмӗшле мӗнпе кӑткӑсланнӑ?

5) Чарӑну паллисем лартассипе ҫыхӑннӑ уйрӑмлӑхсене ӑнлантарӑр.

### Тишкерӳ тӗслӗхӗ

*Пӳлӗмре ҫутӑ та ҫутса ячӗҫ,*[1] *чӳрече карри витӗр пӗр-икӗ хутчен кил хуҫин лӑпсӑркка пуҫӗ курӑнчӗ*[2(I)], *анчах унта урӑх ҫын пурри*[3] *палӑрмарӗ*[4(II)] (Л.Агаков. Юманлӑхра ҫапла пулнӑ).

Ку предложени пурӗ тӑватӑ предикативлӑ пайран тӑрать, тӗп членсем пек ҫыхӑннӑ сӑмахсем: ***ҫутса ячӗҫ; пуҫӗ курӑнчӗ; ҫын пурри; палӑрмарӗ.*** Пӗтӗмӗшле сыпӑнуллӑ хутлӑ предложени пулать, мӗншӗн тесен шухӑшӗ енчен икӗ пая уйрӑлать, вӗсем пӗр-пӗринпе ***анчах*** союзпа ҫыхӑннӑ. Пӗрремӗш пайӗ (I) хӑй союзсӑр хутлӑ предложени пулать, вӑл икӗ предикативлӑ пайран тӑрать, вӗсем пӗр-пӗринпе интонаци пӗрлӗхӗпе ҫыхӑннӑ. Пайӗсем пӗр вӑхӑтра пулса иртекен ӗҫсене сӑнласа параҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсем хушшине запятой лартнӑ. Иккӗмӗш пайӗ (II) пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени, пӑхӑнуллӑ пайӗ(3) тӗп пайӗпе(4) – ***и*** аффикспа ҫыхӑнать, ***мӗн?*** ыйтура тӑрать, подлежащи пӗлтерӗшлӗ пулать. Предложени нимӗнпе те кӑткӑсланман. ***Анчах*** союз умӗн яланах запятой лартмалла.

Предложени схеми:




### 2. Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени

Илемлӗ литература произведенийӗнчен пайӗсем аффикспа, хыҫ сӑмахпа, союзпа, союзла сӑмахпа, вырӑнӗ-йӗркипе ҫыхӑннӑ 5 пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени ҫырса илӗр. Вӗсене кӑтартнӑ йӗркепе тишкерӗр.

### Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложение тишкермелли йӗрке

1) Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пулнине калӑр.

2) Миҫе предикативлӑ пайран тӑрать? Хӑшӗ тӗп пайӗ, хӑшӗ пӑхӑнаканни? Тӗп членӗсем.

3) Пӑхӑнуллӑ пайӗ тӗп пайӗпе мӗнпе ҫыхӑннӑ? Пӑхӑнуллӑ пайӗн ыйтӑвӗ, пӗлтерӗшӗ.

4) Пăхăнуллă пайĕн вырăнĕ, тĕп пайĕпе мĕнле (пĕтĕмĕшлĕн е тĕп пайĕнчи пĕр-пĕр сăмахпа с сăмахсен пĕрлешĕвĕпе) çыхăннă?

5) Предложени мĕнпе каткăсланнă?

6) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр (пур пулсан).

### Тишкерÿ тĕслĕхĕсем

*Кĕрхи çилпе вăрман кашлама тытăнсан*[1] *çулçăсем хăрапă кайăксем пек пăлханаççĕ.вăрмантан явăнса вĕççе тухаççĕ*[2] (М.Трубина).

Ку пăхăнуллă хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *вăрман кашлама тытăнать, çулçăсем вĕççе тухаççĕ*). 2-мĕш предложени – тĕп пайĕ, 1-мĕшĕ – пăхăнулли. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе деепричастин ***–сан*** аффиксĕпе çыхăннă, хăçан? ыйтура тăрать, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, тĕп пайĕ умĕн тăрать, унпа пĕтĕмĕшлĕн çыхăнать. Предложени пĕр йышши членсемпе (*пăлханаççĕ, вĕççе тухаççĕ*) каткăсланнă, вĕсем союзсăр çыхăннă пирки запятой лартса уйăрнă.

Предложени схеми:  .

*Хур кайăксем Çавал патне çитнĕ чух*[1] *шăпах хĕвел хĕмленсе тухрĕ*[2] (Мĕтри Кипек).

Ку пăхăнуллă хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *хур кайăксем çитнĕ, хĕвел тухрĕ*). 2-мĕш предложени – тĕп пайĕ, 1-мĕшĕ – пăхăнулли. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе *чух* хыç сăмахпа çыхăннă, хăçан? ыйтура тăрать, обстоятельство пĕлтерĕшлĕ, тĕп пайĕ умĕн тăрать, ăна пĕтĕмĕшлĕн ăнлантарать. Предложени нимĕнпе те каткăсланман, чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем çук.

Предложени схеми: .

*Вĕсем*[1] *Ярпле мучи утса такăрлатнă*[2] *ансăр сукмакпа пĕчĕк уçланка тухрĕç*[1] (Х.Уяр).

Ку пăхăнуллă хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *вĕсем тухрĕç, Ярпле мучи такăрлатнă*). 1-мĕш предложени – тĕп пайĕ, 2-мĕшĕ – пăхăнулли. Пăхăнуллă пайĕ тĕп пайĕпе вырăнĕ-йĕркипе çыхăннă, *мĕнле*? ыйтура тăрать (*мĕнле сукмакпа?*), определени пĕлтерĕшлĕ, тĕп пайĕ варринче вырнаçнă, тĕп пайĕнчи *сукмакпа* сăмаха ăнлантарать. Предложени нимĕнпе те каткăсланман.

Предложени схеми:  .

## Кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени

### Тишкерӳ йĕрки

1) Предложени миçе предикативлă пайран тăрать? Пайĕсенчи тĕп членсене палăртăр. Предложени тĕсне калăр.

2) Тĕп тата пăхăнуллă пайĕсене тупăр, вĕсем хăйсем мĕнле предложенисем пулнине калăр, кашнине тишкерĕр.

3) Пăхăнуллă пайне (е пайĕсене) тĕп пайĕпе çыхăнтаракан грамматика хатĕрĕсене тупăр, тишкерӳ тăвăр.

4) Предложени пĕтĕмĕшле мĕнпе кăткăсланнă?

5) Чарăну паллисем лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсене ăнлантарăр (пур пулсан).

### Тишкерӳ тĕслĕхĕ

*Пăрахут тăвалла хускалсан*[1] *купца нумайччен алă сулса тăчĕ, унтан карлăк çине кăкăрĕпе ӳпĕнчĕ те*[2] *каç сĕмлĕхĕнче хура тĕслĕн курăнакан Атăл шывĕ анаталла юхнине*[3] *сăнама тытăнчĕ*[2] (Г.Краснов).

Ку предложени виçĕ предикативлă пайран тăрать. Пайĕсенчи тĕп членсем пек çыхăннă сăмахсем: *пăрахут хускалсан; купца тăчĕ, ӳпĕнчĕ, сăнама тытăнчĕ; Атăл шывĕ юхнине.* Илнĕ тĕслĕх кăткăс пăхăнуллă хутлă предложени, мĕншĕн тесен предикативлă пайĕсем виççĕ, вĕсем хушшинче пăхăнуллă çыхăну çеç палăрать.

Предложенин тĕп пайĕ иккĕмĕшпе виççĕмĕш пайсен пĕрлĕхĕ пулать, пăхăнуллă пайĕ – пĕрремĕш предложени. Тĕп пайĕ хăй пăхăнуллă хутлă предложени. Пăхăнуллă пайĕ (3) тĕп пайĕпе (2) пару падежĕн -е аффиксĕпе çыхăнать, мĕне? ыйтура тăрать, объект пĕлтерĕшлĕ пулать.

Пăхăнуллă пайĕ (1) тĕп пайĕпе (2,3) деепричастин ***–сан*** аффиксĕпе çыхăнать, хăçан? ыйтура тăрать, вăхăт обстоятельстви пĕлтерĕшлĕ пулать. Предложени пĕтĕмĕшле пĕр йышши сказуемăйсемпе (тăчĕ, ӳпĕнчĕ, сăнама тытăнчĕ) кăткăсланнă, союзсăр çыхăннисене запятой лартса уйăрнă.




## 3. Союзсăр хутлă предложени

Илемлĕ литература произведенийĕнчен виçĕ союзсăр хутлă предложени (предикативлă пайĕсене запятой, тире, икĕ точка лартса уйăрнă тĕслĕхсем) çырса илĕр, тишкерӳ тăвăр.

### Союзсăр хутлă предложение тишкерӳ тумалли йĕрке

1) Союзсăр хутлă предложени пулнине палăртăр.
2) Миçе предикативлă пайран тăрать? Тĕп членĕсем.
3) Предикативлă пайĕсем мĕнпе çыхăннă?
4) Предикативлă пайĕсем хушшинче мĕнле пĕлтерĕш (шухăш) çыхăнăвĕ палăрать?
5) Предложени мĕнпе кăткăсланнă?
6) Чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхсем?

### Тишкерӳ тĕслĕхĕсем

*Вăрман тӳпине тĕтре хупласа тăрать,*[1] *ун витĕр хĕвелĕн пайăркисем аран-аран кăна сăрхăнса тухаççĕ.*[2] (Д.Гордеев).

Ку союзсăр хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *тĕтре хупласа тăрать, пайăркисем тухаççĕ*). Предикативлă пайĕсем интонаципе çыхăннă, вĕсем пĕр вăхăтри пулăмсене сăнласа параççĕ, çавăнпа вĕсене запятой лартса уйăрнă. Предложени нимĕнпе те кăткăсланман.

Предложени схеми: [1], [2].

*Вăрмансемпе садсем çуллахи пек нумай сас-чĕвлĕ мар ĕнтĕ:*[1] *кайăксем кăнтăралла вĕçме тытăнаççĕ*[2] (Н.Матвеев).

Ку союзсăр хутлă предложени, икĕ предикативлă пайран тăрать (тĕп членĕсем: *вăрмансемпе садсем сас-чĕвлĕ мар, кайăксем вĕçме тытăнаççĕ*). Предикативлă пайĕсем интонаципе çыхăннă, иккĕмĕш пайĕ пĕрремĕш пайне ăнлантарать, уçса парать, çавăнпа вĕсем хушшине икĕ точка лартнă. Предложени нимĕнпе те кăткăсланман.

Предложени схеми: [1] : [2].

### Пайĕсем тĕрлĕ çыхăнура тăракан союзсăр хутлă предложени

Илемлĕ литература хайлавĕнчен пайĕсем тĕрлĕ çыхăнура тăракан пĕр союзсăр хутлă предложени çырса илĕр (хайлав авторне, ятне, тĕслĕхе хăш страницăран илнине кăтартăр), палăртнă йĕркепе тишкерĕр, схемине ӳкерĕр.

## Тишкерӳ йӗрки

1) Предложени миҫе предикативлӑ пайран тӑрать? Пайӗсенчи тӗп членсене тупӑр. Предложени тӗсне калӑр.

2) Предложени шухӑшӗ енчен мӗнле пайланать? Пайӗсем мӗнпе ҫыхӑннӑ?

3) Шухӑшӗ енчен уйрӑлакан пайсем хӑйсем мӗнле предложенисем пулаҫҫӗ? Вӗсене кашнине тишкерӗр.

4) Предложени пӗтӗмӗшле мӗнпе кӑткӑсланнӑ?

5) Чарӑну паллисем лартассипе ҫыхӑннӑ уйрӑмлӑхсене ӑнлантарӑр.

## Тишкерӳ тӗслӗхӗ

*Ҫут ҫанталӑк пытарса усранине*[1] *тупма ҫӑмӑлрах:*[2(I)] *кашни япала*[3] *ӗмӗрсем иртнӗ май*[4] *ҫиеле тухать.*[3] *пӗр ҫын тупайманнине* [5] *тепри тупать*[6] [(II)] (В. Эктел. Шавкӑн).

Ку предложени пурӗ ултӑ предикативлӑ пайран тӑрать. Пайӗсенчи тӗп членсем: 1) *ҫут ҫанталӑк* (подл.) *усранине* (сказ.); 2) *ҫӑмӑлрах* (сказ.); 3) *япала* (подл.) *ҫиеле тухать* (сказ.); 4) *ӗмӗрсем* (подл.) *иртнӗ* (сказ.); 5) *ҫын* (подл.) *тупайманнине* (сказ.); 5) *тепри* (подл.) *тупать* (сказ.). Ку союзсӑр хутлӑ предложении, мӗншӗн тесен вӑл шухӑшӗ енчен икӗ пая уйрӑлать, вӗсем пӗр-пӗринпе интонаципе пӗрлешеҫҫӗ. Пӗрремӗш пайӗ ( I ) хӑй пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени пулать: пӑхӑнуллӑ пайӗ (1) тӗп пайӗпе (2) пару падежӗн –е аффиксӗпе ҫыхӑнать, дополнени пӗлтерӗшлӗ, мӗне? ыйтура тӑрать. Иккӗмӗш пайӗ ( II ) – хӑй союзсӑр хутлӑ предложени, вӑл тӑватӑ предикативлӑ пайран тӑрать, шухӑшӗ енчен каллех икӗ пая уйрӑлать. Пӗрремӗш пайӗ – пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени, пӑхӑнуллӑ пайӗ (4) тӗп пайӗпе (3) ***май*** хыҫ сӑмахпа ҫыхӑнать, хӑҫан? ыйтура тӑрать, обстоятельство пӗлтерӗшлӗ пулать. Иккӗмӗш пайӗ те пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени. Пӑхӑнуллӑ пайӗ (5) тӗп пайӗпе (6) –е аффикспа ҫыхӑнать.

Предложени нимӗнпе те кӑткӑсланман. Союзӑр хутлӑ предложенин иккӗмӗш пайӗ(I) пӗрремӗшне(II) ӑнлантарса тӑнӑ пирки вӗсем хушшине икӗ точка лартаҫҫӗ. Иккӗмӗш союзӑр хутлӑ предложенире пайӗсем пӗр евӗрлӗрех пулӑмсене сӑнланӑ пирки вӗсем хушшине запятой лартаҫҫӗ.

Предложени схеми:

I II



## Усӑ курмалли литература

1. *Андреев И.А.* Чӑваш синтаксисӗн ыйтӑвӗсем. II пай. – Шупашкар, 1975.

2. *Андреев И.А.* Чӑваш чӗлхи. 8–9 классем валли. – Шупашкар, 2001.

3. *Андреев И.А.* Чӑваш чӗлхи. Синтаксис. – Шупашкар, 2005.

## Тишкерӳ тумалли текстсем

1. Кам юратмасть-ши ҫуллахи ырӑ кунсенче пулла ҫӳреме? Пӑхӑр-ха, Сӗве кукринче миҫе пулӑҫ ларать! Кашнийӗнех вӑлта яма ятарласа тунӑ ҫур утрав пур. Миҫе ҫур утрав кунта? Шутласа та кӑлараяс ҫук. Вӗсене мӗнле тунине пӗлетӗр-и? Ҫыран хӗррине, кӑштах шыва кӗрсе, шалчасем ҫапнӑ та ҫур кӑшӑл пек туса ҫатан авнӑ, унтан тӑпра купаланӑ *(А.Кӑлкан).*

2. Ҫынсем юпа уйӑхӗнче ҫавакан юра питех шанмаҫҫӗ. Чӑнах та, вӑл ҫӗрле е ирхине шӳсе ҫемҫелнӗ ҫӗр питне тӑрӑшсах шурӑ пӗркенчӗкпе витет, анчах каҫчен унӑн тӗсӗ те юлмасть. Чӳк уйӑхӗнчи юр вара ун пек мар, вӑл часах ирӗлсе пӗтмест, хӑш чух икӗ-виҫӗ кун хушши, тепӗр чух эрни-эрнипех ура айӗнче кӑчӑртатса выртать *(М.Кипек).*

3. Хутран-ситрен ҫапла та пулкалать. Чӳк уйӑхӗ пуҫламӑшӗнчех ҫанталӑк сивӗтет. Ҫил ҫурҫӗр енне ҫаврӑнать те, кутсӑр-пуҫсӑр ҫилтӑман ахӑрма тытӑнать. Пӗр кун иртет, тепӗр кун иртет. Юр ҫаплах ҫӑвать те ҫӑвать. Юлашкинчен вӑхӑтлӑха чарӑннӑ пек пулать. Хӗвел те хӑмӑр пӗлӗт айӗнчен тухса пӑхать. Анчах ҫурҫӗр ҫилӗ тӗнчене шӑнтмаллипех шӑнтса ярать те, чӗркуҫҫи таран хӗвел кайнӑ юр ҫуркуннеччченех выртса юлать *(М.Кипек).*

4. – Ҫук, ӑна нимӗн те асаплантармасть. Пирӗн килте пурте йӗркеллӗ. Ӗҫре те ӑна хисеплеҫҫӗ. Ӑна ӗҫрен тухма йывӑр пулать... Йӑлана кӗнине хирӗҫлеймӗн. Куна хӑвӑрах пӗлетӗр! *(П.Алексин).*

5. Ҫуркунне, ҫут ҫанталӑк чӗрӗлсен, чи малтан йӑмрана сӗткен кӗрет. Касса илетӗн те пӗр-пӗр якарах турата шаккаса шанкине ӳкеретӗн, пулас шӑпӑр (шӑхлич) валли хуппинчен чӗлӗх тӑватӑн. Анкарти хыҫӗнчех – вӗтлӗх вӑрманлӑх. Тарӑн ҫырма. Унта шӗшкӗ хуппине касса сӗветӗн. Ҫак хуппа чӗлӗх ҫине чӗркесе каятӑн. Акӑ сана ӗне мӑйраки пысӑкӑш шӑхлич хатӗр те *(А.Емельянов).*

6. – Итле-ха, шӑпӑрлан. Арҫут ҫырмине пӗлетӗн-и? Унта тӑм шӑтӑкӗсем пур. Ҫиелти шӑтӑкра – шур тӑм. Ҫавӑнта кайса ху пуҫу пысӑкӑш илсе кил *(А.Емельянов).*

7. Пирĕн пӳрт вырăнĕнче урамалла тăватă чӳречеллĕ чул çурт ларать. Пӳрт çумĕнчех сăрланă вырăсла хапха, унтан лаç... Лаç умĕнче пахча. Чиесем те ватăлса кайса йăмрапа танах çĕкленнĕ. Картине улăштарнă, лаç тăррисене шиферпа витнĕ. Пахча умĕнче сак *(А.Емельянов)*.

8. Тĕлĕк-и ку, чăн-и? Куçăмсене уçатăп та пĕр хушă шалт тĕлĕнсе выртатăп. Чăн та, кил картинчи вут купи çинче мар иккен эпĕ, мамăк тӳшек çинче. Каснă-лартнă тĕлĕкре курнă чаплă пӳлĕмех, хаклă кавирсем, ылтăн хашаклă ӳкерчĕксем, автомат, фляга... Анчах та чи тĕлĕнмелли – ман пуç вĕçĕнче Лисук ларать! Гимнастеркăпа вăл, çинçе пилĕкне чĕн пиçиххипе туртса çыхнă *(А.Артемьев)*.

9. Акă тĕмĕсем. Мĕн тери хăрушшăн курăнаççĕ вĕсем тĕттĕм каç! Автомата çирĕпрех тытатăп. Акă кабель татăкĕ... Асăрхануллăн йĕри-тавралла пăхса илтĕм: такам пур пекех туйăнать. Пăч тĕттĕм, сывăхра пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнмест *(А.Артемьев)*.

10. Клуб еннелле хавасланса утатăп. Ман чĕрере пысăк савăнăç. Эпĕ хам çамрăкшăн та, ырă сывă пулнăшăн та яла ĕçлеме таврăннăшăн та, савнине тĕл пулнăшăн та пĕтĕм чунтан савăнатăп! Нумайрах пурăнас, ĕçлес, юратас килет манăн *(А.Артемьев)*.

11. Ашшĕ вăрăм сăмсаллă шур картусĕпе. Хĕвеле хирĕç пăхма меллĕ тет унпа. Вăрçăран таврăннă хулăн тĕплĕ аттине те пăрахмасть-ха. Шăлаварĕ те çĕнĕччĕ-ха ашшĕн иртнĕ çулсенче *(Ив. Егоров)*.

12. Çуллĕ çыранра эпир иккĕнех. Манăн та пусăрăнчăк кăмăл çĕкленме пуçларĕ. Унпа çумлăн тăрса кăшт çамрăкланса кайрăм-ши? Пĕлме çук *(Ив. Егоров)*.

13. Эпир ик енĕпе те йывăççем ашкăрса ларакан ансăр урампа турбазăналла пыратпăр. Ватăрах йывăççене тĕллĕн-тĕллĕн касса янă. Çаплипех выртаççĕ-ха, тирпейлеме ĕлкĕреймен-мĕн. Вĕсем урлă каçкаласа хӳме çумнерехри тем сарлакăш тунката патне пырса тухрăмăр *(Ив. Егоров)*.

14. Хĕр темшĕн ман ытама лекнипе килĕшесшĕн пулмарĕ. Самантлăха та. Тӳрех çĕре сиксе анчĕ, мана та хăйĕнчен хăвармарĕ. Алла-аллăн тытăнса турбаза тепĕр енчен самаях чăнкă çырана çитрĕмĕр. Аялта – шыв *(Ив. Егоров)*.

15. Тунтикун. Чурачăкра пасар. Редактор районĕçтăвком ларăвне тухса кайрĕ. Пĕччен тунсăх. Манăн чĕре вырăнта мар ĕнтĕ. Шухăшпа пĕрре яла, тепре Шупашкара çитетĕп... Унтан каллех редакцие *(Г.Ефимов)*.

16. Эх, пыраттӑмӑр вара ҫапса ҫӑвакан ҫумӑра хирӗҫ. Утма йывӑр, сивӗ. Шинель аркине ҫил силлет, туллать. Хырсем, чӑрӑшсем вӗҫӗмсӗр кашлаҫҫӗ, авӑнаҫҫӗ, силленеҫҫӗ, пӗр-пӗрин ҫумне тайӑнаҫҫӗ. Пӗр-пӗринпе пӑшӑлтататнӑ пек *(В.Алентей).*

17. Шап-шурӑ юрлӑ тавралӑх хӗвел ҫутинче чаплӑн йӑлтӑртатса выртать. Застава ҫурчӗ тӑрринчен тумла юхать. Хаваслӑ, ырӑ. Эп хуллен уткаласа ҫӳретӗп. Ҫӗнӗ шинельпе. Атӑпа. Аллӑмра – винтовка *(В.Алентей)*

18. Пурнӑҫ! Мӗн тери савӑнаҫлӑ та тунсӑхлӑ вӑл. Пурнӑҫра шухӑшламалли, ӑнланмалли мӗн тери нумай. Аслӑ тӗнчери ӗмӗр сӳнми пурнӑҫпа танлаштарас пулсан ҫын ӗмӗрӗ шӑрпӑк чӗртсе сӳнтернӗпе пӗрех. Кӑшт ҫуталчӗ те сӳнчӗ вӑл. Анчах ҫав кӗске ӗмӗрте мӗн-мӗн кӑна курмасть-ши, тӳсмест-ши этем? *(В.Алентей).*

19. Ҫапла вӑрман тӑрӑх аташса ҫӳресен-ҫӳресен пӗр тунката ҫине канма лартӑм. Йӗри-тавра тем ҫӳллӗш курӑк. Кӗпҫеленнӗ серте, упа сарри, вӑрман кантӑрӗ, шурут. Шухӑша кайрӑм *(В.Алентей).*

20. Декабрӗн юлашки кунӗсем. Ҫил ҫукпа пӗрех. Сивӗ. Урама тухсанах вӑл пите ҫулӑм пек пӗҫертсе илет. Йӑмрасем шап-шурӑ паспа хупӑрланнӑ. Туратсем ҫине хитре чӗнтӗр ҫакса хунӑ пекех туйӑнать *(В.Алентей).*

21. Вара куҫ умне каллех Чӑваш ҫӗр-шывӗ тухатчӗ. Аякраччӗ вӑл сенкер кӳлӗсен ҫӗр-шывӗнчен. Ҫамрӑк каччӑн унта халь тесен халь вӗҫсе каяс килетчӗ. Ҫӑлтӑрсен ҫумӗпе, уйӑх ҫумӗпе вӗҫес килетчӗ унӑн. Кӑвак сӗмлӗх витӗр, тӗтрелӗх витӗр *(В.Алентей).*

22. Эсӗ кӑпӑшка ҫӗрте тем чухлӗ кӑтра кӑмпа ларнине курах каятӑн. Пурте сарӑ хӑмӑр. Тӗксӗмленме, хуралма ӗлкӗреймен. Эппин, нумай пулмасть тухнӑ. Пысӑкӑшӗ те чӑх ҫӑмарти чухлӗ кӑна. Татма васкамастӑн-ха. Ӑҫта ҫухалччӑр! Эсӗ пӑхса йӑпанасшӑн. Татсассӑн та ӑна карҫинккана тӳрех хурас килмест. Ара вӑл пӗрремӗш кӑмпа-ҫке. Вӑрманӑн чи малтанхи парнийӗ! *(Г.Орлов).*

23. Тимофей Иванович хӑй тӑрӑх пӑхса илет. Паян вӑл ҫар тумӗпе. Арӑмӗн арчинче ҫирӗм ҫул хушши выртнӑ салтак гимнастеркине, галифепе хром аттине тӑхӑннӑ. Кӑкӑрӑн сылтӑм енче Гварди значокӗ, Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗ. Медалӗсене шӑл порошокӗпе тап-таса ҫутатнӑ *(А.Емельянов).*

24. Эсӗ пӑх-ха... Эпӗ те сан пекех ҫамрӑк ҫын пулса ӳснӗ. Анчах манӑн хальхи пек ҫамрӑклӑх пулнӑ-и? Пулман. Акӑ эсӗ ҫирӗмре.

Сан умра мĕн тĕрлĕ сарлака та аслă çул. Анчах ман умра çирĕмрс чухне мĕн пулнă? *(С.Лашман).*

25. Тамарăпа Кавруш та унта утса пычĕç.

– Улăхăр!

Малтан Тамарăна хăпартса лартрĕç. Унтан Каврушпа Карачăм иккĕшĕ те йывăç тураттисем çине улăхса утлана-утлана ларчĕç *(Д.-Чалтун).*

26. Тĕп сакайне анăпăр та миçе витре çĕр улми юлнине шутлăпăр. Çĕр улмийĕ пирĕн аптрамаллах пулманччĕ-ха кăçал. Çĕрĕ хура пирĕн. Сăпани мăнаккун – тăмлă вырăн. Лайăх кăна шутласа илĕпĕр хамăр çĕр улмисене, ытлашшине – Кипеккассине леçĕпĕр. Атя, хывăн та тĕп сакайне сик *(В.Енĕш).*

27. Халь килне кай. Эсĕ хăвăн пархатарлă ĕçне вĕçленĕ. Чуну хушнипе. Чун хушнă ĕç вара нихăçан та пăсăк пулмасть. Ха, эсĕ, Шăнкăрч, пĕртте пĕчĕк мар иккен! Атя, кай. Чипер çит, Шăнкăрч! *(В.Енĕш).*

28. Лайăх сапсан, ачам, кашни пĕрчĕ çĕре тăрăнса ларать. Сăвăс свĕр. Вара сўрелемелли çеç юлать. Тепре ывăçласа ил-ха...

Начар! Тырра ывăçланă-ывăçламан чышку сан чул пек хытă пултăр *(В.Енĕш).*

29. ...Вăл куллен ĕçре, иртен пуçласа каçчен ура çинче. Хăйпе пĕрле çичĕ пыра тăрантарма тивет вĕт-ха унăн... Кайран пĕчĕкрен те пĕчĕк çăпата ăсталăпăр. Кулинейккă валли. Пĕр тăхтаса тăмасăр *(В.Енĕш).*

30. Кăнтăр вăхăчĕ. Хире тухнă йыш валли колхоз пăтă пĕçерттернĕ. Пăри пăтти. Çынсем çырма пуçне вырнаçнă. Васкамасăр, шăкăл-шăкăл калаçса апатланаççĕ. Пăшăхнă Шăнкăрчăн апатне те çиес, шывне те ĕçес килет *(В.Енĕш).*

31. Эпĕ пĕр ĕç илес килтĕм. Çак тимĕр патакĕнчен пуртă туса параймăн-ши? Унсăрăн нимпе вутă касма çук. Антихриссем пуртă таранччен сутса пĕтерчĕç вĕт. Çуртран хуса кăларса ячĕç *(Д.-Чалтун).*

32. – Ухмах? Ухмах мар вăл – чĕрĕ юлхав. Колхоза çырăнсан кашни кун ĕçлес пулать. Халĕ вăл ĕçлес тесен – ĕçлет, ĕçлес мар тесен – пăшалне çакать те вăрман тăрăх çапкаланса çўрет. Унтан ывăнса килет те куçĕсем шыçăниччен çывăрать *(Д.-Чалтун).*

33. Çулсем çын пурӑнни-пурӑнманнине кӗтсе тӑмасӑр сӑлӑ кашкӑр çӑварне лекесрен хӑраса таракан куянран та хӑвӑртрах мӗлтлетсе иртеççӗ иккен. Анчах пуçланать пек çулталӑк - унӑн хӳрине, чакакӑннинчен виçӗ хут кӗскерехскерне, путлӗн курса та юлаймастӑн *(Д.-Чалтун).*

34. Каялла килнӗ çӗре пӳртре çутӑ çукчӗ. Асӑрханса чӳрече умӗнчен иртрӗм. Лида пӳлӗмӗнче чӗнтӗрлӗ карри витӗр шурӑ мӗлке курӑнса кайнӑ пек туйӑнчӗ – тепӗр хут пӑхма хӑяймарӑм. Çук, мана туйӑнчӗ кӑна пулмалла *(В.Игнатьев).*

35. Çапах та, мӗншӗн сас-хура памасть вӑл? Юри мана тарӑхтарасшӑн-и? Тен, иккек сиксе тухнӑ ун килӗнче? Тен, тата, çырас килмест унӑн? Манса каймарӗ-и уйрӑлнӑ-уйрӑлманах? *(В.Игнатьев).*

36. Акӑ вӑрман хӗрри. Нимӗç салтакӗсен малти линийӗ. Траншейӑсене хыр-чӑрӑш лӑссипе çывӑхран та курӑнмалла мар хуплань. Бруствера çерелпе витнӗ *(С. Юшков).*

37. Унта халь шурӑ каççем, çавӑнпа калатӑп, – терӗ Ирина. - Çак шурӑм пуç майлӑрах вӑл, анчах ун пек те мар. Эх, кайса кӑтартасчӗ сана пӗрре! Леня, атя, кӗртсе яр мана, ху та кайса çывӑр. Анчах тӑххӑрта кил вара. Килте тем шутлаççӗ ӗнтӗ ман пирки? Лекет-ха пӗрре *(В.Игнатьев).*

38. Нанил аппа – колхоз бригадирӗ. Кӗре хирӗç уйрӑмах хӗрӳ вӑхӑт уншӑн. Сӗтел çинче Нанил аппа хатӗрлесе хӑварнӑ апат: хура çӑкӑр, çӗр улми, пӗр стакан сӗт. Тӗнчери чи тутлӑ апат *(Ю.Силэм).*

39. Ытарма çук кун. Савса, кулса пӑхать хӗвел. Ӑшӑ. Тӳлек. Çап-çутӑ та тап-таса урам. Çулласа тасатнӑ пек. Пӳрт çумӗнчи саксем, пӗренесем çинче ватӑ-вӗтӗ ларать. Ача-пӑча чупать, айкашать *(И.Моисеева).*

40. Анатра пӑшалпа печӗç. Ун сассине илтсен Пӑлаки аппа йӗрсе ячӗ. Пӗр сассӑр. Ӗсӗклемесӗр. Хул-çурӑмӗ вӗттӗн-вӗттӗн чӗтрерӗ ун *(В.Енӗш).*

41. Йӑнӑшмарӗ Вӗçелис. Вӑл çитнӗ çӗре правлени умӗнче халӑх чылайччӗ ӗнтӗ. Правлени алӑкӗ умӗнче, çӳллӗ картлашка çинче, Роман пиччепе районтан килнӗ уполномоченнӑй тата вӑл – çӗнӗ председатель тӑраççӗ. Председатель шупкаланнӑ гимнастеркӑпа, галифе шалаварпа *(П.Афанасьев).*

42. Тухтар йӗри-тавра çаврӑнса пӑхрӗ. Никам та çук. Тухтар пир татӑкӗпе çыхнӑ чӗркене салтрӗ. Шурӑ япала. Кӗпе-çке! Шап-

шурă йĕтĕн ҫиппинчен тĕртсе ҫĕленĕ шурă кĕпе. Ҫухипе ҫанни вĕҫне, аркине парăс ҫиппипе тĕрленĕ. Тĕрри калама ҫук чечен *(И.Микулайĕ).*

43. Пўртре ҫуркунне шăрши. Пирĕн сак айĕнче шăрчăк вĕҫĕмсĕр чĕриклетет. Малти вар шырланĕнче карласа юхакан ҫурхи шыв сасси чўречерен шăппăн-шăппăн илтĕнет *(К.Чулкаҫ).*

44. Кĕтмен телей сиксе тухрĕ ун умне паян! Акă мĕншĕн ирех юрлас килчĕ иккен... Пултăрах! Ҫамрăк ан пултăр! Ун вырăнне пĕр-пĕр пысăк начальник пулса ĕҫлет пулмалла вăл. Телефон номерĕсем пачĕ... Лайăх ĕҫ тупса парас пирки шантарчĕ. Тата епле ҫепĕҫ, культурăллă тытать хăйне... Интеллигент!.. *(Л.Сачкова).*

45. Ҫанталăк тўлек, ăшă. Сап-сар хĕвел. Йĕри тавра ҫап-ҫутă. Хĕвел шевли шыв ҫинче вылять *(М.Трубина).*

46. Сăрт айккипе симĕс курăк. Симĕс курăк ҫийĕн такăр суккмак илемлĕн авкаланса сăрт айккипе каять. Сунара тухнă Мучар. Ав сăрт айккинче хăмăшлă ҫутă кўлĕсем *(М.Трубина).*

47. Лутра хăвасем шыв ҫинчех пуҫланаҫҫĕ. Вĕсен хыҫĕнче ҫирĕксем, йĕлмесем. Инҫех те мар – кĕпер. Ҫутă кăвак тĕспе сăрланă ăна. Хитрескер *(Л.Таллеров).*

48. Каллех тĕрĕслесе пăхрĕҫ. Хальхинче Юнна Стела Семеновна чĕрине сылтăм енче шырарĕ. Акă иккен вăл, аран-аран тăлтлатса тапать. Пациента палатăна ăсатнă хыҫҫăн профессор ҫав сылтăм кăкăрта йăва ҫавăрнă чĕре пирки калаҫса кайрĕ *(В.Эльби).*

### Тишкерў тумалли предложенисем

Пианист таврара мĕн пуррине асăрхамарĕ; унăн чун хавалĕ ҫĕкленнипе куҫ шăрҫисем пысăкланса, хуралса кайрĕҫ, вăрăм ҫырă ҫўҫĕ куҫ харшисем ҫинелле сапаланса пычĕ, хавхаланнă этемĕн ăста аллисене парăннă фортепьяно пĕрре аслати пек кĕрлерĕ, тепре кĕсле пек ҫепĕҫ янăрарĕ *(А.Артемьев).*

Эпĕ, шухăшсăр-мĕнсĕр ял шăплăхĕпе киленсе пыраканскер, хĕрарăм ҫине малтанласа пит тимлесех те пăхман-тăр, анчах та иксĕмĕр ҫывăхланса пынă май темĕнле вăрттăн туйăм хĕрарăма тинкеререх пăхма хистерĕ *(Г.Ефимов).*

Унтанпа нумай ҫул иртнĕрен тепĕр чух Павăл авланман та пек туйăнать ĕнтĕ, Лисукĕ вара кĕске тĕлĕкре курнă ҫын пек ҫеҫ туйăнать *(А.Таллеров).*

Чарӑнса тӑнӑ чух капот ҫине пӗр шӑна ларчӗ те машина хӑвӑрт пынӑ май ниспле те вӗҫсе юлаймарӗ, капот ҫумнех лапчӑнса пычӗ, шофер тарӑн ланкашка тӗлӗнче тормозласан тин вӑл капотран хӑпӑнма пултарчӗ *(Ю.Скворцов).*

Ашшӗ, ӗшенсе ҫитнӗскер, часах ҫывӑрса кайрӗ, вӑл вӑрӑммӑн сывланине Куҫма лайӑххах илтрӗ *(Н.Петров).*

Концерт пӗтсен Маюк клуб патӗнче чылайччен тӑчӗ, вара Модест Палановӑпа клубран хула хул тытса тухнине курсан шӑппӑн, никама систермесӗрех килелле утрӗ *(Г.Ефимов).*

Каччӑ ҫавӑнса тасалчӗ, Селиме панӑ тӗреллӗ кӗпине, ҫӗнӗ шӑлаварӗпе пиншакне тӑхӑнчӗ, ҫиелтен тата тепӗр пиншак уртса ячӗ, каҫ тӗттӗмӗ ҫывхарсан урама тухрӗ *(Илп. Микулайӗ).*

Микихвер бригада ҫыннисем ытлашширех хӗрӳленнине туять, арҫынсене аллипе суллать вӑл, анчах лешсем куҫӗсемпе Шакмакова тӑрӑннӑ та нимӗн те асӑрхамаҫҫӗ *(Г.Краснов).*

Актаев тӳсме ҫук ыратнипе тӑна кӗчӗ те ҫав самантрах хӑйӗн пӗтӗм шӑмшакӗ хытса ларнине, ӑна ту пек йывӑр япала пусса выртнине туйрӗ *(А.Артемьев).*

Поезд тапранса кайнӑ хыҫҫӑн ҫынсем майӗпе шӑпланма пуҫларӗҫ, мӗншӗн тесен халь тин ним тума та май килмен *(Л.Агаков).*

Хӗрупраҫӑн ӑшри туйӑмӗ ҫамрӑклах вӑй илсе аталаннӑ пулсан вӑл каччӑ уҫҫӑн калайман шухӑша та хӑйне кура тӗрӗс тӗшмӗртет *(Илп. Микулайӗ).*

Ут яракансем кӗпӗрленсе тӑнӑ тӗле вӑл чылай кайран, ыттисем мала тухнисене парнесем валеҫнӗ чух тин, пырса ҫитрӗ *(К.Турхан).*

Павӑл Чӗкеҫ колхоз правленийӗн членӗ пулнине аса илчӗ те, ӑна Кольцовпа Ильдеменов унта та, колхоз правленийӗнче, Чӗкеҫ кирек мӗн каланӑ-каламан пуҫӗсене сӗлтсе килӗшнӗн туйӑнса кайрӗ *(Л.Таллеров).*

Анчах туй кӗрленӗ вӑхӑтра, иккӗмӗш кунӗнче, Виктор, хӗрӗнкӗскер, Тая енчен пынӑ каччӑсемпе ҫапӑҫса кайни ӑна хытах хуйха ӳкерчӗ *(А.Артемьев).*

Кӗтӳҫсем пулман пулсассӑн, тен, ҫак пуйӑссем те ҫӳреместчӗҫ, самолетсем те вӗҫместчӗҫ, завод-фабрикӑсем те чарӑнса ларатчӗҫ *(А.Емельянов).*

Малтанласа вăл ирĕксĕр çеç, ту ÿкерчĕкĕсем питĕ кăсăклантарнă пек, енчен енне пăхкаларĕ, кайран вара хĕр унпа пĕрле килмс килĕшни хăех нумая пĕлтернине шухăшласа илсен кăмăлĕ уçăлса кайрĕ те – чăнласах тискертерех илем ăна тыткăна илчĕ *(Ю.Скворцов).*

Пăсланакан чаплашкасем умне ларсан, пĕчĕк кашăкпа вĕри кофе пăтратма тытăнсан Лена Варлам шанчăксăр, суя чунлă çын мар иккен тесе шухăшласа илчĕ *(Д.Гордеев).*

Вăл пирс кайăксем ашшĕсĕр тăрса юлни, иккĕмĕш кун чĕпписем патне таврăнманни, вĕсем аптăраса çитни, çак самантра пулăшу пулмасан вĕсем вилме пултарни çинчен каласа ăнлантарчĕ *(Г.Луч).*

Амăшĕн вĕри куççулĕсем хура-шур пĕркелесе пĕтернĕ пичĕ тă-рăх, çурхи пĕчĕк çырмасем çул шыраса кукăр-макăр тĕмескесем хушшинче юхнă пек, саланчĕç *(Н.Петров).*

Чăнкă çыран тĕлĕнче выртакан пысăк чулсем хушшинче пытан-са кун каçнă хыççăн, тĕттĕм пулсан, вăл маяк хуралçи пурăнакан çурта пырса кĕнĕ *(М.Кипек).*

Хамăр чавса хатĕрленĕ окопсем тăшман самолечĕсене курăнмал-ла мар, кам ĕлкĕрет, çавăн маскировка ĕçне хушасса кĕтмесĕрех ты-тăнмалла *(Илп. Микулайĕ).*

Хĕвĕл пайăркисем тÿррĕн ÿкнĕрен çак çÿçе пĕр-пĕр пысăк ăста ылтăн шывĕпе сирпĕтсе тухнă та, çав шыв кăштах типсе çитеймен пек туйăнать *(Г.Ефимов).*

Ывăлĕсене те вăл кайăка çÿрес ĕçе ачаранах вĕрентнĕччĕ, анчах аслă ывăлĕпе вăталăххи граждан вăрçинче шуррисемпе çапăçса вилчĕç, кĕçĕнни вăрманта çÿрессине питех юратмарĕ вара *(М.Кипек).*

Саламби Казаковпа курса калаçас тесе ун хваттерне кĕчĕ, ан-чах телей пулмарĕ: Петя Пысăк Нина патне кÿршĕ района кайнă иккен *(А.Артемьев).*

Ачасем чир пуснипе яслие кайман чухне вĕсене утьăкка сиктер-се ларчĕ вăл, хăйсен сĕт-турăхĕпе тăрантарса усрарĕ *(В.Петров).*

Вăрăм сухал ял енчи çÿçе йывăççине кăтартас тесе ун еннелле çаврăннăччĕ, анчах Кент хытса тăчĕ – вăл çывăхри вĕтлĕхрен Урас-мет йăпшăнса тухнине асăрхарĕ *(К.Турхан).*

Çамрăк çын çĕлĕкне хыврĕ те вырăн çинчи хĕрача çине куç ывăтрĕ, хальхинче вăл пĕр çирĕм ик-çирĕм виç çулсенчи каччă пулни курăнчĕ *(Ю.Скворцов).*

Вăрăм сухал ял енчи çÿçс йывăççине кăтартас тесе ун еннелле çаврăннăччĕ, анчах Кент хытса тăчĕ – вăл çывăхри вĕтлĕхрен Урасмет йăпшăнса тухнине асăрхарĕ *(К.Турхан).*

Ку утияла Клава Аркадий салтакран таврăнсан туй пуласса ĕмĕтленсе Хусантанах илсе таврăннăччĕ *(Н.Петровская).*

Вăл, ман еннелле çурăмпа тăраканскер, каялла вăрт çаврăнчĕ те, эпĕ тĕлĕнсе хытсах кайрăм: ман умра хам çирĕм çул каялла тĕл пулнă «вăрман пики», вун пилĕк çулхи Тамаркă, тăра парать *(А.Артемьев).*

Ашшĕ-амăшĕсем ăçта та пулин çĕр выртмаллах хăнана кайнă пулсан кÿршĕ хĕрĕсем пĕчĕк улах ăçта пуласса пĕр-пĕрне систерсех тăратчĕç *(В.Тимаков).*

Пÿрт умне çитеспе купăс сасси каллех шăпланчĕ, урамра такам мăкăртатса калаçни, кулни илтĕнчĕ, унтан чÿрече янахĕ çумĕнчех тем кăштăртатрĕ те, кантăк карри урлă, тул енчен, этем пуçĕ курăнчĕ *(А.Артемьев).*

Экзамента вăл сасартăках пăлхана пуçларĕ, аудиторие ректор кĕрсе ларсан, Салампи пушшех пăлханма тытăнчĕ; хăй каламалли ыйтусене хут çине çырнă чух унăн алли тарласа кайрĕ, чĕтре пуçларĕ, сас паллисем кукăр-макăр пулса пĕтрĕç *(А.Артемьев).*

Салампие ку питĕ тарăхтарчĕ, анчах пуринчен ытла ăна Саланов хĕрсе кайса тавлашни тĕлĕнтерчĕ: çак пахчаçă, хăйĕн ĕçĕшĕн пĕтĕм чунне параканскер, нихçан та литературăна е искусствăна çав терисех юратман пуль тесе шутланăччĕ хĕр *(А. Артемьев).*

Çенĕкре алăк шалтлатни, такам васкаса утни илтĕнсен, Яшманов шăпланчĕ, графинран шыв тултарса ĕçрĕ те, çын кĕресс кĕтсе, алăк çинелле пăхса ларчĕ, кăшт лăпланнă пек пулчĕ *(А. Артемьев).*

Хĕвел çаврăнăшĕ симĕс чух хăш еннелле тайăлнине никам та асăрхасах каймасть, анчах вăл ÿссе сарăлнăçемĕн, сап-сарă пуç кăшăлĕпе илемленнĕçемĕн ăçталла туртăнни пурне те аякран курăнать *(А. Артемьев).*

Çапла майĕпен çу уйăхĕсем ирте пуçларĕç, анчах çав шăрăх утçи кунĕ карчăк асĕнчен каймарĕ; ывăлĕпе амăшĕ хушшине кӳршĕ хĕрĕ кĕрсе тăни карчăка паян кун та пăшăрхантарать *(А.Артемьев).*

Фронтра пулнă çыншăн кунта ытла та лăпкă: бомба та, снаряд та аçа çапнă пек шартлатса çурăлмасть, аманнă салтак чуна тивекен сасăпа ахлатни те илтĕнмест *(А. Артемьев).*

Чăваш хĕрарăмĕ кăштах канма май килсен те, пуçне çытар çине хума кăна ĕлкĕрет – шурăмпуç килнине сиссе вырăн çинчен сиксе тăрать, каллех ĕмĕр тăршшĕпе алăран каймн ĕçе тытăнать *(Н.Мранькка).*

## Харпăр хăй тĕллĕн тишкермелли ăслăлăх ĕçĕсем


1. *Алексеев А.А.* Порядок расположения компонентов в определительных словосочетаниях чувашского языка // УЗ ЧНИИ. – Вып. 39. – Чебоксары, 1969. – С. 223-230.

2. *Андреев И.А.* Структура простого предложения в чувашском языке. Автореферат докторской диссертации. – М., 1970.

3. *Андреев И.А.* Структура именных синтагм в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 39. – Чебоксары, 19 . – С. 78-99.

4. *Андреев И.А.* Порядок слов в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 49. – Чебоксары, 1970. – С. 3-28.

5. Андреев И.А. К вопросу об обособлении членов предложения // УЗ ЧНИИ. – Вып. 49. – Чебоксары, 1970. – С. 115-136.

6. *Андреев И.А.* Об одной синтаксической особенности деепричастия на -са/-се/ // УЗ ЧНИИ. – Вып. 27. – С. 161-176.

7. *Андреев И.А.* Пăхăнуллă союзсен синтаксисри вырăнĕ çинчен // УЗ ЧНИИ. – Вып. 27. – С. 177-189.

8. *Андреев И.А.* Вăхăта пĕлтерекен пăхăнуллă предложениллĕ пăхăнуллă хутлă предложенисем // УЗ ЧНИИ. – Вып. 21. – Чебоксары, 1962.

9. *Павлов И.П.* О сложноподчиненных предложениях с частицей те в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 34. – Чебоксары, 1967. – С. 145-152.

10. *Павлов И.П.* Чăваш чĕлхинчи -тăк/-тĕк/ татăклă конструкцисем // УЗ ЧНИИ. – Вып. 26. – Шупашкар, 1963. – С. 66-81.

11. *Павлов И.П.* Чăваш чĕлхинче хирĕçлев союзĕсем пулса кайни тата вĕсемпе сыпăнуллă хутлă предложенисече усă курни // УЗ ЧНИИ. – Вып. 49. – Чебоксары, 1970. – С. 47-61. Малалли // Чувашский язык, литература и фольклор. – Вып. I. – Чебоксары, – 1972. С. 94-111.

12. *Павлов И.П.* Особенности употребления слова *тесе* в чувашском языке // Вопросы чувашского языка и литературы и искусства. – Чебоксары, 1960. – С. 26-40.

13. *Павлов И.П.* Хуть /хăть/ союзпа ҫыхăнакан пăхăнуллă предложенисем ҫинчен // УЗ ЧНИИ. – Вып. 37. – Чебоксары, 1966.

14. *Павлов И.П.* Союзы пулсан та, пулин те в сложноподчиненных предложениях с придаточными уступительными в чувашском языке // Вопросы русской и чувашской филологии (ЧГУ). – Вып. I. – С.230-238.

15. *Павлов И.П.* О двух типах деепричастных конструкций в чувашском языке (к вопросу о придаточном предложении) // УЗ ЧНИИ. – Вып. 12. – Чебоксары, 1955.

16. *Павлов И.П.* Чăваш чĕлхинчи -и, -ши татăксемпе ҫыхăнса пулнă пăхăнуллă хутлă предложенисем // УЗ Кировского госпединститута. – Вып. 26. – Чебоксары, 1965.

17. *Павлов И.П.* Придаточные предложения с союзом пулсан // УЗ ЧНИИ. – Вып. 16. – Чебоксары, 1958. – С. 294-313.

18. *Павлов И.П.* О сложноподчиненном предложении с придаточным цели и условия в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 28. – Чебоксары, 1965. – С. 121-129.

19. *Павлов И.П.* Сложноподчиненные предложения с союзом мĕншĕн тесен в чувашском языке // Вопросы чувашской филологии. – Чебоксары, 1974. – С. 85-115.

20. *Павлов И.П.* Об изафетных конструкциях в современном чувашском языке // Материалы научной сессии ЧНИИ. Проблемы словосочетаний в тюркских языках. – Чебоксары, 1975.

21. *Павлов И.П.* Япала ятне вырăн тата вăхăт тăрăх ăнлантаракан определенисем ҫинчен // Чĕлхене нормăлас ыйтусем. – Шупашкар, 1985. – 22-44 с.

22. *Резюков Н.А.* К вопросу о сложноподчиненных предложениях в чувашском языке // УЗ ЧНИИ. – Вып. 14. – Чебоксары, 1956.

# ТĂВАН ЧĔЛХЕНЕ ПУÇЛАМĂШ КЛАССЕНЧЕ ВĔРЕНТМЕЛЛИ МЕСЛЕТЛĔХПЕ ÇЫРМАЛЛИ ТĔРĔСЛЕВ, КУРС ТАТА ДИПЛОМ ĔÇĔСЕМ

Психологипе педагогика факультечĕн пуçламăш шкул учителĕсене хатĕрлекен уйрăмĕнче вĕренекен студентсем тăван чĕлхене пуçламăш классенче вĕрентмелли меслетлĕхпе тĕрĕслев, курс тата диплом ĕçĕсем çыраççĕ. Пособин тĕп тĕллевĕ – студентсене çак ĕçсене çырма пулăшасси.

## Тăван чĕлхе меслетлĕхĕпе çырмалли тĕрĕслев ĕçĕ Пĕтĕмĕшле ăнлантарни

Тĕрĕслев ĕçĕн тĕллевĕ – студент лекцисенче тата хăй тĕллĕн вуласа тупнă пĕлĕве практикăпа çыхăнтарма пĕлнине тĕрĕслесси. Ĕçе çырма пуçличчен студентăн панă литературăпа паллашмалла, лекци конспекчĕсене, практика занятийĕсенче пурнăçланă ĕçсене пăхса тухмалла. Ун хыççăн çеç тĕрĕслев ĕçне çырма пуçăнмалла. Тĕрĕслев ĕçне уйрăм тетрадь çине çырсан аван. Преподавателе асăрхаттарусене кăтартма меллĕ пултăр тесе тетрадь листин пĕр енне çеç кăвак с хура пастăпа çырмалла. Малтан ĕçĕн условине çырмалла, ун хыççăн ăна пурнăçламалла. Çырнă чух орфографипе пунктуаци правилисене çирĕп пăхăнмалла. Титул листине каярах кăтартнă пек йĕркелесе çырмалла.

## Пуçласа вулама-çырма вĕрентес ĕç меслетлĕхĕпе çырмалли тĕрĕслев ĕçĕ

1. Шкула тин çеç килнĕ ача хăйĕн тăван чĕлхине вĕренме хатĕррипе хатĕр маррине тĕрĕслемелли ыйтусемпе ĕçсем хатĕрлĕр:
   а) сăмах йышĕ хăш шайрине тĕрĕслемелли ĕç;
   ă) вулама пĕлнипе пĕлменнине тĕрĕслемелли ĕç;
   б) сасă тишкерĕвĕ тума хатĕррине тĕрĕслемелли ĕç;
   в) çыхăнуллă калаçма пĕлнине тĕрĕслемелли ĕç.

2. Пуçласа вулама-çырма вĕрентмелли меслетсене асăнăр. Хальхи анализпа синтез сасă меслечĕн йĕркине çырса кăтартăр.

3. Пуçласа вулама-çырма вĕрентес ĕç букварь умĕнхи, саспаллисемпе паллаштарас тата букварь хыççăнхи тапхăрсенчен тăрать. Çак тапхăрсен тĕп уйрăмлăхĕсене çутатса парăр.

4. Чӑвашла пуҫласа вулама-ҫырма вӗрентмелли кӗнекесем хатӗрленӗ чух шута илмелли тӗп принципсене палӑртӑр. «Чӑваш букварӗн» тытӑмне уҫса парӑр.

5. «Чӑваш букварӗн» хатӗрлев (букварь умӗнхи) тапхӑрӗ валли хатӗрленӗ пӗр-пӗр страницине тишкерӗр:

а) мӗнле материал пур;

ӑ) материала мӗнле тӗллевпе панӑ.

6. Панӑ сӑмахсенчен хӑш сасӑсене уйӑрса илсе тишкерме меллӗ: *вӑрман, автан, кукӑль, лаша, выля, упа.*

7. *[К, л, р, н, х, т, ъ, ç, v, j]* сасӑсене уйӑрса илсе тишкерме сӑмахсем шыраса тупӑр.

8. «Чӑваш букварӗн» саспаллисемпе паллаштармалли тапхӑрӗ валли хатӗрленӗ пӗр-пӗр страницине тишкерӗр:

а) мӗнле материал панӑ;

ӑ) материала мӗнле тӗллевпе панӑ.

9. «Чӑваш букварӗн» букварь хыҫҫӑнхи тапхӑрӗ валли хатӗрленӗ пӗр-пӗр страницине тишкерӗр:

а) мӗнле материал панӑ;

ӑ) материала мӗнле тӗллевпе панӑ.

10. Пуҫласа вулама-ҫырма вӗрентес ӗҫ меслетлӗхӗпе юлашки вунӑ ҫулта пичетленсе тухнӑ статьясен списокне тӑвӑр.

## Усӑ курмалли литература


1. *Артемьева Т.В.* Вопросы методики обучения грамоте в чувашской школе. – Чебоксары, 2003.

2. *Артемьева Т.В.* Чӑвашла вулама-ҫырма вӗрентмелли кӗнекесем ҫинчен кӗскен // Родной и русский языки в начальных классах чувашской школы: Сборник статей. – Вып.2. – Чебоксары, 1988.

3. *Артемьева Т.В.* Ултӑ ҫулхисене вулама-ҫырма вӗрентес опытран // Родной и русский языки в начальных классах чувашской школы: Сборник статей. – Вып.2. – Чебоксары, 1988.

4. *Сергеев Л.П.* Букварь умӗнхи уроксене ирттересси // Проблемы развития речи учащихся. Развитие речи дошкольников и младших школьников. – Чебоксары, 1983.

5. Тӑван чӗлхе урокӗсем. 1 класс. – Шупашкар, 1986.

6. «Чӑваш чӗлхи методики». Пуҫламӑш шкул учителӗсемпе вӗсене хатӗрлекен факультет студенчӗсем валли. – Шупашкар, 2002.

## Пуплеве аталантарнӑ май чӑваш чӗлхин тӗрлӗ сийӗсенчи материалпа паллаштарас ӗҫ меслетлӗхӗпе ҫырмалли тӗрӗслев ӗҫӗ

### Фонетика материалӗпе ӗҫлесси

1. Панӑ сӑмахсенчен хӑшӗсем фонетика терминӗсем: артикуляци, сасӑ, сыпӑк, пусӑм, саспалли, пуплев, хупӑ сасӑ, фонема, тема, транскрипци, дикци, алфавит, текст.

2. 1 класра ӗҫлемелли фонетика материалӗ, ӑна программӑна кӗртнин тӗллевӗ.

3. 2 класра ӗҫлемелли фонетика материалӗ, ӑна программӑна кӗртнин тӗллевӗ.

4. 3 – 4 классенче ӗҫлемелли фонетика материалӗ, ӑна программӑна кӗртнин тӗллевӗ.

5. Фонетика материалӗпе ӗҫленӗ чух усӑ куракан тухӑҫлӑ меслесене ҫырса кӑтартӑр.

6. Фонетика материалӗпе ӗҫлемелли пӗр-пӗр урокӑн анлӑ планне ҫырса кӑтартӑр.

### Орфографи материалӗпе ӗҫлесси

1. Фонетика, морфологи, традици принципӗсене пӑхӑнса ҫырмалли сӑмахсем кашни принципӗпе пилӗкшер тупса ҫырӑр.

2. Пуҫламӑш классенче мӗнле орфографи правилисемпе паллаштарма палӑртнӑ? Кашни правилине схема евӗр ӳкерсе кӑтартма тӑрӑшӑр.

3. Ача *Ванюк* сӑмаха *Ваньук* тесе ҫырать. Ҫак йӑнӑш мӗнпе ҫыхӑннӑ?

4. Тӗрӗс ҫырма вӗрентмелли пӗр-пӗр меле ҫырса кӑтартӑр.

5. Орфографи темипе ирттермелли пӗр-пӗр урокӑн анлӑ планне ҫырӑр.

### Морфологи материалӗпе ӗҫлесси

1. Сӑмах пулӑвӗ ҫинчен пуҫламӑш класс ачисем мӗнле пӗлӳ илеҫҫӗ? Программӑсене тата вӗренӳ кӗнекисене тишкерсе тухӑр.

2. Пуҫламӑш классенче мӗнле пуплев пайӗсемпе паллаштарма палӑртнӑ?

3. Пуҫламӑш шкултан вӗренсе тухакан ачан япала ячӗ ҫинчен мӗн пӗлмелле?

4. Пуҫламӑш шкултан вӗренсе тухакан ачан глагол ҫинчен мӗн пӗлмелле?

5. Паллӑ ячӗ ҫинчен пуҫламӑш шкултан вӗренсе тухакан ача мӗн пӗлет?

6. Пуçламăш классенче морфологи материалĕпе ĕçлемелли тĕп меслет. Тĕслĕхсемпе çирĕплетсе кăтартăр.

7. Пуплев пайĕсем çинчен вĕрентнĕ май мĕнле орфографи правилисемпе паллаштарма палăртнă? Пĕр-пĕр урокăн анлă планне çырса кăтартăр.

8. Пуçламăш классенче мĕнле пунктуаци правилисемпе паллаштарма палăртнă? «Чăваш чĕлхи» кĕнекесенче пунктуаци правилисене мĕнле материалпа пĕрле парса пынă?

9. Пуçламăш классенче ачасен словарьне пуянлатас тĕлĕшпе мĕнле ĕçлемелле? Ĕç системине уçса парăр.

10. Пуçламăш шкулта вĕренекен ачасене тăван чĕлхене вĕрентес меслетлĕхпе юлашки вунă çулта пичетленсе тухнă статьясен списокне тăвăр.

## Усă курмалли литература


1. «Чăваш чĕлхи методики»: Пуçламăш шкул учителĕсемпе вĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли. – Шупашкар, 2002.

2. *Сергеев Л.П.* Чăваш чĕлхине пуçламăш шкулта вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем. – Шупашкар, 1998.

3. Тăван чĕлхе урокĕсем. 1 класс. – Шупашкар, 1989.

4. Тăван чĕлхе урокĕсем. 2 класс. – Шупашкар, 1991.

5. Тăван чĕлхе урокĕсем. 3 класс. – Шупашкар, 1992.

6. Тăван чĕлхе урокĕсем. 4 класс. – Шупашкар, 1993.

7. Русский язык в начальных классах: Теория и практика обучения: Учеб. пособие для студентов пед. учебн. заведений. – Соловейчик М.С. и др. – М.: ЛИНКА-ПРЕСС, 1994.


## Класри тата класс тулашĕнчи вулав урокĕсен меслетлĕхĕпе çырмалли тĕрĕслев ĕçĕ

1. «Тăван сăмах» кĕнекесен тытăмне тишкерĕр, вĕсене йĕркеленин тĕп принципĕсене çырса кăтартăр.

2. «Тăван сăмах» кĕнекесене кĕртнĕ хайлавсен авторĕсем. Икĕ автор çинчен туллин çырса кăтартăр.

3. Мĕн вăл вулав тĕрĕслĕхĕ? Тĕрĕс вулама вĕрентмелли 1 - 2 меле çырса кăтартăр.

4. Мĕн вăл вулав ăнланулăхĕ? Ăнланса вулама вĕрентмелли 1 - 2 меле çырса кăтартăр.

5. Мĕн вăл вулав хăвăртлăхĕ? Кирлĕ хăвăртлăхпа вулама вĕрентмелли 1 – 2 меле çырса кăтартăр.

6. Мĕн вăл вулав палăртулăхĕ? Палăртуллă вулама вĕрентмелли 1 - 2 меле çырса кăтартăр.

7. 2-мĕш класра вуламалли пĕр-пĕр сăввăн партитурине тăвăр.

8. 3-мĕш класра вуламалли пĕр-пĕр хайлава илĕр те палăртăр:

а) жанрне;

ă) тĕп шухăшне;

б) хайлава вулас умĕнхи ĕçе;

в) текстпа пирвайхи хут паллаштармалли меле тата мĕншĕн çак меле суйласа илнине;

г) ăнлантарса памалли сăмахсене тата вĕсен пĕлтерĕшĕсене уçса памалли мелсене;

д) хайлава тишкернĕ чух усă курмалли ыйтусемпе ĕçсене.

9. Вулав урокĕсенче час-часах тĕл пулакан ĕçсем: калаçу, текстпа паллашни, суйлавлă вулав, сасса кирлĕ пек улăштарса вулани, словарь ĕçĕ, текста пайсем çине уйăрса план туни, содержание каласа пани, текста иллюстрацилени т. ыт. те. Çак ĕçсене урокăн хăш тапхăрĕсенче мĕнле тĕллевпе тата мĕнле пурнăçламалла.

10. 4-мĕш класра 3-мĕш чĕрĕкре ирттермелли пĕр-пĕр вулав урокĕн анлă планне çырăр.

11. Класс тулашĕнчи вулава йĕркелессин тапхăрĕсем, кашни тапхăрăн тĕп тĕллевĕ. 4-мĕш класра ирттермелли класс тулашĕнчи вулав урокĕн анлă планне çырăр.

12. Ачасен вулав хăнăхăвне тĕрĕслесси тата хакласси. Пуçламăш шкул пĕтернĕ тĕле ачасен вулавĕ мĕнле шайра пулмалла. Çак вăхăтра вулав техникине тĕрĕслеме май паракан текст шыраса тупăр, çырса кăтартăр.

13. Класри тата класс тулашĕнчи вулав урокĕсен меслетлĕхĕпе юлашки вунă çулта пичетленсе тухнă статьясен списокне тăвăр.

## Усă курмалли литература

1. «Чăваш чĕлхи методики»: Пуçламăш шкул учителĕсемпе вĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли. – Шупашкар, 2002.

2. Светловская Н.Н. Методика внеклассного чтения. Пособие для учителя. – М., 1977.

3. Тăван чĕлхе урокĕсем. 1 класс. – Шупашкар, 1989.

4. Тăван чĕлхе урокĕсем. 2 класс. – Шупашкар, 1991.

5. Тăван чĕлхе урокĕсем. 3 класс. – Шупашкар, 1992.

6. Тăван чĕлхе урокĕсем. 4 класс. – Шупашкар, 1993.

## Çыхăнуллă пуплеве аталантарас ĕç меслетлĕхĕпе çырмалли тĕрĕслев ĕçĕ

1. Мĕн вăл текст? «Текст» терминпа ачасем хăçан паллашаççĕ?

2. «Тема», «текстăн тĕп шухăшĕ» сăмахсен пĕлтерĕшне мĕнле ăнланнине çырса кăтартăр.

3. Аяларах ачасен сочиненийĕсен тĕслĕхĕсене панă. Вĕсене тишкерĕр. Мĕн асăрхарăр? Мĕн тума пĕлмеççĕ-ши ачасем? Мĕнле йăнăшсем тăваççĕ?

*Эпё аннене пулăшни.*

*Эпĕ аннене пулăшатăп. Манăн шăллăм пур. Анне пирĕншĕн яланах тăрăшать. Пушă вăхăтра вăл пирĕнпе вылять те, кĕнекесем те вулать. Эпĕ аннене юрататăп.*

*Хĕрарăмсен кунĕ.*

*Çуркунне кунсем вăрăмланаççĕ. Хĕвел хытăрах та хытăрах хĕртме пуçлать. 8-мĕш мартра эпĕ аннене уяв ячĕпе саламлатăп. Анне те мана саламлать. Эпĕ çак уява питĕ юрататăп.*

*Кураксем вĕçсе килчĕç.*

*Кураксем вĕçсе килчĕç. Юр купаланса выртать-ха. Шур сăмсаллă хура хăнасем – чи малтан вĕçсе килекен кайăксем. Март çурри кăна-ха. Вĕсем васкамасăр çулсем çинче утса çӳреççĕ, хурт-кăпшанкă пуçтараççĕ. Тата вĕсем хăйсем валли йăвасем тăваççĕ.*

*Юратнă тетте.*

*Манăн юратнă тетте пур. Вăл – Наташа ятлă пысăк хитре пукане. Эпĕ ăна ытти ачасене те выляма паратăп. Вăл питĕ хитре. Эпĕ ăна юрататăп.*

4. Мĕн вăл изложени? Çак ĕçе мĕнле тĕллевпе ирттермелле?

5. 3 класра изложени çырма текст суйласа илĕр, урокăн анлă планне çырăр. Урока ирттерĕр. Ачасен тĕрĕсленĕ ĕçĕсене тăратăр.

6. Мĕн вăл сочинени? Çак ĕçĕн тĕп тĕллевĕ.

7. 4 класра сочинени çырма тема палăртăр, урокăн анлă планне çырăр. Урока ирттерĕр. Ачасен тĕрĕсленĕ ĕçĕсене тăратăр.

Усă курмалли литература


1. «Чăваш чĕлхи методики»: Пуçламăш шкул учителĕсемпе вĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли. – Шупашкар, 2002.

2. Русский язык в начальных классах: Теория и практика обучения: Учеб. пособие для студентов пед. учебн. заведений. – Соловейчик М.С. и др. – М.: ЛИНКА-ПРЕСС, 1994.

3. Тăван чĕлхе урокĕсем. 1 класс. – Шупашкар, 1989.

4. Тăван чĕлхе урокĕсем. 2 класс. – Шупашкар, 1991.

5. Тăван чĕлхе урокĕсем. 3 класс. – Шупашкар, 1992.

6. Тăван чĕлхе урокĕсем. 4 класс. – Шупашкар, 1993.

## Тăван чĕлхене пуçламăш классенче вĕрентмелли меслетлĕхпе çырмалли курс тата диплом ĕçĕсем

Аслă шкултан вĕренсе тухакан кашни специалистăн тĕпчевçĕ те пулмалла.

Пуçламăш шкул учителĕсене хатĕрлекен уйрăмра вĕренекен студентсем тăван чĕлхене пуçламăш классенче вĕрентмелли меслетлĕхпе курс тата диплом ĕçĕсем çыраççĕ, çавăнпа та вĕсен курс е диплом ĕçĕн темине суйласа илме, суйласа илнĕ темăпа тĕпчев ĕçĕ çырма пĕлмелле.

Пĕтĕмĕшле илес пулсан, харпăр хăй тĕллĕн тĕпчев ĕçĕ çырма вĕренме студентсем пĕрремĕш курсранах пуçлаççĕ. Çак ĕçе вĕсем рефератсем, тĕрĕслев ĕçĕсем çырнă, докладсем хатĕрленĕ май хăнăхса пыраççĕ. Çапла майпа пулас учительсем ăслăлăх тĕнчине ура ярса пусаççĕ, юлашки курс тĕлне диплом ĕçĕ çырма хатĕрленсе çитеççĕ. Диплом ĕçĕ студент учитель пулса ĕçлеме хатĕррипе хатĕр маррине тÿрремĕнех кăтартса парать. Хальхи вăхăтра, шкул практикинче тĕрлĕ вĕрентÿ кĕнекисемпе, тĕрлĕ программăсемпе усă курма ирĕк панă чухне, вĕрентекенсен уйрăмах харпăр хăй тĕллĕн пĕтĕмлетÿсем тума, вăл е ку программăна, кĕнекене ĕçре тĕрĕслесе пăхма пĕлмелле. Ку çеç те мар-ха. Вĕрентекенĕн хăйĕн те пуçламăш классенче тăван чĕлхене вĕрентес ĕçпе çыхăннă уйрăм проблемăсене курма, палăртма, палăртнă хыççăн усса пама пĕлмелле.

Мĕншĕн? Мĕн пирки? Мĕнпе çыхăннă вăл е ку пулăм? Студента çак ыйтусене хуравлама хатĕрлесе çитересси, урăхла каласан, тĕпчев ĕçĕсем тума вĕрентесси – аслă шкулăн тивĕçĕ.

Курс ĕçĕнче те, диплом ĕçĕнче те студентăн çакăн пек ыйтусене татса памалла:

1) темăна май килнĕ таран туллин усса памалла;

2) ĕçе харпăр хăй тĕллĕн пурнăçламалла; курс ĕçĕ те, диплом ĕçĕ те пичетленсе тухнă статьясемпе кĕнекесенчен çырса илнĕ цитатăсен пуххи ан пултăр;

3) суйласа илнĕ темăпа çыхăннă литературăпа паллашни ĕçре усăмлă курăнмалла;

4) мал шухăшлă учительсен опытне усса пани, учитель-заочник хăйĕн ĕçне çырса кăтартни пулмалла;

5) ĕçе литература чĕлхипе, йăнăшсемсĕр çырма тăрăшмалла.

Кашни студентăн тĕпчев ĕçĕ çырнă чух наука ертÿçи пулать. Ĕçе çырма пуçлас умĕн те, çырнă тапхăрта та студентăн наука ертÿçипе тачă çыхăну тытмалла: пĕлменнине ыйтса пĕлмелле, ĕçĕн тытăмĕпе содержанийĕ пирки яланах канашламалла.

Диплом ĕçне çырса пĕтерсен хÿтĕлевччен пĕр уйăх маларах кафедрăна тăратмалла. Енчен те ĕçе наука ертÿçи лайăх хак панă пулсан (хак пани кафедрăна тăратиччен пулмалла), кафедра ертÿçи ĕçе йышăнни çинчен çирĕплетсе алă пусать те диплом ĕçне рецензилеме парать. Рецензентсене кафедра палăртать.

Рецензире диплом ĕçне пĕтĕмĕшле те, унăн кашни пайне уйрăммăн та хаклани пулмалла. Хакланă чух ĕçĕн лайăх енĕсене те, çитменлĕхĕсене те кăтартма манмалла мар, пĕтĕмĕшле мĕнле паллă лартса хаклама май пуррине кăтартмалла.

Хўтĕлев умĕн студент рецензисемпе паллашать, ыйтусене хуравлама хатĕрленет.

Диплом ĕçĕ çўлерех асăннă ыйтусене тивĕçтерсен ăна Патшалăх Аттестаци комиссийĕн уçă ларăвĕнче хўтĕлеме ирĕк параççĕ. Ларура студент диплом ĕçĕн тĕп шухăшĕсене каласа парать, вĕсене учительсен опытĕнчен тата хăй пухнă опытран илнĕ тĕслĕхсемпе, пĕтĕмлетўсемпе çирĕплетет. Çавăн пекех студент наука ертўçипе рецензентăн асăрхаттарăвĕсем çинче чарăнса тăрать, вĕсен ыйтăвĕсене хуравлать. Кун хыççăн Патшалăх Аттестаци комиссийĕ хăйĕн хупă ларăвĕнче диплом ĕçне мĕнле шайра пурнăçланине тата хўтĕленине палăртать те оценка лартать. Диплом ĕçне япăх паллăпа хакласан студента патшалăх экзаменне тытма ирĕк параççĕ, анчах диплом памаççĕ, справка çеç çырса параççĕ.

Диплом ĕçĕсем кафедрăра пилĕк çул хушши упранаççĕ.

## Диплом ĕçне йĕркелени

Диплом ĕçне ятарласа диплом çырмалли альбома çырсан аван. Текста компьютерпа пичетлесен аван. Кашни страницăрах «поля» текен пушă вырăн хăвармалла: сулахай енче – 3 см, сарлакăш, сылтăм енче – 1,5 см., çўлте тата аялта – 2,5 см. Хут листин пĕр енне çеç çырмалла. Кашни страницăна номерлесе тухмалла. Титул листине номерлемеççĕ, анчах страницăсен шутне кĕртеççĕ.

Титул хыççăнхи страницăра диплом ĕçĕн планне çырмалла.

Диплом ĕçĕ, пĕтĕмĕшле илсен, кўртĕмрен, икĕ е виçĕ пайран, пĕтĕмлетўрен, усă курнă литература списокĕнчен тăрать.

Кўртĕмре авторăн суйласа илнĕ темăн актуаллăхне çутатса памалла, тĕпчевĕн предметне, тĕллевне, задачисене, гипотезине, тĕпчев меслечĕсене палăртмалла.

Пайсенче (главасенче) «Кўртĕм» пайра палăртнă задачăсене пурнăçланине çырса кăтартмалла. Кашни пай çак пайра мĕн çырнине пĕтĕмлетнипе вĕçленмелле.

Диплом ĕçĕн вĕçĕнче панă пĕтĕмлетўре тĕпчев ĕçĕн гипотези тĕрĕс е тĕрĕс мар пулнине çирĕплетсе памалла, тĕллеве пĕтĕмĕшле мĕнле пурнăçланине пĕтĕмлетсе çырса кăтартмалла.

Диплом ĕçĕн кашни пайне çĕнĕ страницăран пуçласа çырмалла. Кирлĕ вырăнта, паллах, абзацсем пулаççĕ. Цитатăсем пулсан вĕсене кавычкăна илсе пулать. Унсăр пуçне, скобкăра е сноска евĕр цитатăна хăш авторăн мĕнле кĕнекинчен (ĕçĕнчен, статйинчен) илнине кăтартмалла. Тĕслĕхрен:

«Пуплев культури – çыннăн пĕтĕмĕшле культурин пĕр енĕ. Вăл чĕлхе мелĕсемпе – сăмахсемпе тата фразеологизмсемпе, грамматика формисемпе тата синтаксис конструкцийĕсемпе тĕрĕс усă курассине, пуплевре шухăшсене пĕр-пĕринпе килĕшÿллĕ çыхăнтарса пырассине, калаçнă чухне пуплев ситуацине, кампа пупленине, калаçăва хутшăнакансен кăмăл-туйăмне шута илессине, йăлăхтармăш сăмахсемпе пуплеве кичемлетсе ярасран асăрханассине, калас шухăша витĕмлĕх кÿрассине т. ыт. те пĕлтерет» [8, 40 с.].

[8, 40 с.] тесе çырни çакна пĕлтерет: çак цитатăна усă курнă литература списокĕнчи 8-мĕш кĕнекерен, 40-мĕш страницăран илнĕ (А.Е.Горшковăн «Чăваш чĕлхи» ятлă кĕнеки).

Цитатăна ăçтан илнине сноска евĕр мĕнле кăтартмаллине ăслăлăхпа публицистика стилĕпе çырнă тĕрлĕ кĕнекере пăхма пулать.

Диплом ĕçĕн вĕçĕнче студент хăй усă курнă литература списокне çырса парать. Йăна йышăннă йĕркене пăхăнса çырмалла. Усă курнă литературăна алфавит йĕркипе çырса тухмалла. Пĕр-пĕр авторăн тĕрлĕ вăхăтра тухнă ĕçĕсемпе усă курнă пулсан вĕсене хушамат хыççăн хронологи йĕркипе кăтартмалла.

Пĕр-пĕр автор е авторсен ушкăнĕ çырнă кĕнекене çапла кăтартаççĕ:

*Сергеев Л.П., Филиппова Д.С., Максимова Р.С., Трокина Р.И. Чăваш чĕлхи методики. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2002.*

Кĕнеке авторне кăтартман пулсан тÿрех кĕнеке ятне çырмалла (пĕрремĕш сăмаха кура ăна алфавит йĕркипе хăй вырăнне çыраççĕ):

*Родной и русский языки в начальных классах чувашской школы: Сборник статей. – Вып. 2. – Чебоксары, 1988.*

Пĕр-пĕр сборникран илнĕ статьяна çакăн пек çырса кăтартмалла:

*Артемьева Т.В. Чăвашла вулама-çырма вĕрентмелли кĕнекесем çинчен кĕскен // Родной и русский языки в начальных классах чувашской школы: Сборник статей. – Вып.2. – Чебоксары, 1988.– С.98–107.*

Статьяна пĕр-пĕр журналта вуланă пулсан ăна вара списокра çакăн пек çырса кăтартмалла:

*Васильев Е.В. Ырă йăла-йĕркесен шкулĕ. Сывлăх сунма вĕренер // Халăх шкулĕ. – 1993. – 1-мĕш №. – 81–83 с.*

Диплом ĕçĕнче хушма материал та пулма пултарать. Кунта ытларах урок планĕсем, хăнăхтарусен, текстсен пуххисем, ачасен ĕçĕсем т. ыт. те пулаççĕ.

Пуçламăш классенче тăван чĕлхене вĕрентес меслетлĕхпе çырнă диплом ĕçĕн калăпăшĕ 50 – 60 пичетленĕ страницăран кая пулмалла мар. Титул листине мĕнле йĕркелемеллине 53-мĕш страницăра пăхăр.

## Диплом ĕçĕсен тематики

Диплом ĕçĕсен темисене кафедра палăртать, факультет Канашĕпе университет ертўçисем çирĕплетеççĕ. Анчах та кашни студентăн хăйĕн тема суйласа илме право пур. Студент диплом ĕçне кафедра сĕннĕ темăпа кăна мар, хăй ĕçлеме кăмăллакан темăпа та çырма пултарать. Паллах, кун пек чухне унăн çак темăпа ĕçлени шкул практикишĕн усăллă пулнине ăнлантарса пама пĕлмелле.

Диплом ĕçĕн темине факультет деканĕ çирĕплетет, çавăнпа та студентăн темăна тата наука ертўçине палăртнă хыççăн факультет деканĕнчен диплом ĕçĕн темине тата наука ертўçине çирĕплетме ыйтса çырмалла.

Малалла студентсене тĕпчев ĕçĕн темине палăртма пулăшас тĕллевпе диплом ĕçĕсен тематикине панă. Суйласа илме меллĕрех пултăр тесе темăсене тăван чĕлхене пуçламăш классенче вĕрентес ĕç меслетлĕхĕн структурăллă пайĕсемпе уйрăмшарăн илсе кăтартнă.

### Пуçласа вулама-çырма вĕрентесси, пуплеве аталантарасси

1. Чăваш ачисене пуçласа вулама-çырма вĕрентмелли кĕнекесем.
2. Пуçласа вулама-çырма вĕрентнĕ тапхăрта ачасене харпăр хăй тĕллĕн ĕçлеме хăнăхтарасси.
3. Пуçласа вулама-çырма вĕрентнĕ тапхăрта вĕренўре ĕлкĕрсе пырайман ачасемпе ĕçлесси.
4. Пуçласа вулама-çырма вĕрентнĕ тапхăрта вăйă мелĕпе усă курасси.
5. Пĕчĕк комплектлă шкулсенче пуçласа вулама-çырма вĕрентес ĕçе йĕркелессин уйрăмлăхĕсем.
6. Пуçласа вулама-çырма вĕрентнĕ тапхăрта дидактика материалĕсемпе усă курасси.
7. Букварь тапхăрĕнче ачасене çырма вĕрентесси, каллиграфи хăнăхăвне аталантарасси.
8. Пуçласа вулама-çырма вĕрентес ĕçре халăх сăмахлăхĕпе усă курасси.
9. Пĕрремĕш класра хушма вулав кĕнекисемпе ĕçлесси.
10. Букварь умĕнхи тапхăрта ачасен пуплевне аталантармалли меслем.
11. Букварь тапхăрĕнче ачасен пуплевне аталантармалли мелсем.
12. Букварь хыççăнхи тапхăрта ачасен пуплевне аталантармалли мелсем.
13. Пуçласа вулама-çырма вĕрентнĕ тапхăрта орфографи хăнăхăвĕсене аталантарасси.
14. Ача садĕнче, килте ачана шкула хатĕрлесси.
15. «Чăваш букварĕнчи» тата ытти ўкерчĕксемпе пуçласа вулама-çырма вĕрентмелли уроксенче усă курни.

## Усӑ курмалли литература

1. «Чӑваш чӗлхи методики». Пуҫламӑш шкул учителӗсемпе вӗсене хатӗрлекен факультет студенчӗсем валли. – Шупашкар, 2002.

2. *Артемьева Т.В.* Чӑвашла вулама-ҫырма вӗрентмелли кӗнекесем ҫинчен кӗскен // Родной и русский языки в начальных классах чувашской школы: Сборник статей. – Вып.2. – Чебоксары, 1988.

3. *Артемьева Т.В.* Ултӑ ҫулхисене вулама-ҫырма вӗрентес опытран // Родной и русский языки в начальных классах чувашской школы: Сборник статей. – Вып.2. – Чебоксары, 1988.

4. *Артемьева Т.В., Рыбакова А.В.* 5 – 6 ҫулхи ачасене шкула хатӗрлесси. – Шупашкар, 2001.

5. *Сергеев Л.П.* Букварь умӗнхи уроксене ирттересси // Проблемы развития речи учащихся. Развитие речи дошкольников и младших школьников. – Чебоксары, 1983.

6. Тӑван чӗлхе урокӗсем. 1 класс. – Шупашкар, 1986.

7. *Аргинская И.И.* и др. Обучаем по системе Л.В. Занкова (1 класс): Пособие для учителя. – М.: Новая школа, 1991.

8. *Горецкий В.* и др. Уроки обучения грамоте. – 3-е изд. – М.: Просвещение, 1988.

9. *Львов М.Р.* Основы обучения правописанию в начальной школе. 2-е изд. – М.: Прометей, 1988.

10. *Львов М.Р.* Речь младших школьников и пути ее развития: Пособие для учителя. – М.: Просвещение, 1975.

11. Нечаева Н.В. Организация литературного творчества: Методические рекомендации. – М.: Новая школа, 1992.

12. *Политова Н.Н.* Развитие речи учащихся начальных классов. – М.: Просвещение, 1984.

13. Речь. Речь. Речь: Книга для учителя. – Под ред. Ладыженской Т.А. – М.: Педагогика, 1990.

14. Русский язык в начальных классах: Теория и практика обучения: Учебн. пособие для студентов пед. учеб. заведений. – Под ред. Соловейчик М.С. – М.: ЛИНКА–ПРЕСС, 1994.

15. *Светловская Н.Н.* Методика внеклассного чтения: Пособие для учителя. – М.: Просвещение, 1977.

16. *Артемьева Т.В.* Вопросы методики обучения грамоте в чувашской школе. – Чебоксары, 2003.

## Класра тата класс тулашӗнче вулама вӗрентесси, пуплеве аталантарасси

1. Пуҫламӑш классенче ачасен вулав техникине аталантарасси.
2. Пуҫламӑш классенче вӗренекен ачасене ӑнланса вулама вӗрентесси.

3. Пуҫламӑш классенче вӗренекен ачасене сасса кирлӗ пек улӑштарса, тивӗҫлӗ интонаципе вулама вӗрентесси.

4. Вулав урокӗсенче текстпа ӗҫлесси.

5. Пуҫламӑш классенче вӗренекен ачасен вулас кӑмӑлне ӳстересси.

6. Вулав урокӗсенче ачасене харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлеме вӗрентесси.

7. Вулав урокӗсенче ачасен творчествине аталантарасси.

8. Вулав урокӗсенче пысӑк калӑпӑшлӑ произведенисемпе ӗҫлессин уйрӑмлӑхӗсем.

9. Пӗтӗмлетӳ урокӗсене ирттересси.

10. Вулав урокӗпе ытти уроксем хушшинчи ҫыхӑнусем.

11. Вулав урокӗсенче ваттисен сӑмахӗсемпе тата тупмалли юмахсемпе ӗҫлесси.

12. Вулав урокӗсенче «Ача-пӑча сӑмахлӑхӗ» темӑна вӗрентессин уйрӑмлӑхӗсем.

13. Вулав урокӗсенче ачасене Тӑван ҫӗршыва юратма вӗрентесси.

14. Класс тулашӗнчи вулав валли кӑларнӑ кӗнекесем.

15. Вулав урокӗсенче сӑвӑсемпе ӗҫлесси.

16. Вулав урокӗсенче юмахсемпе ӗҫлесси.

17. Класс тулашӗнчи вулав урокӗсенче ачасен ҫыхӑнуллӑ пуплевне аталантарасси.

18. Пӗчӗк комплектлӑ шкулта вулав урокӗсене йӗркелесси.

## Усӑ курмалли литература

1. «Чӑваш чӗлхи методики». Пуҫламӑш шкул учителӗсемпе вӗсене хатӗрлекен факультет студенчӗсем валли. – Шупашкар, 2002.

2. Тӑван чӗлхе урокӗсем. 1 – 4 классем валли.

3. *Гаркунова Л.И.* Вопросы и задания для уроков чтения: Пособие для учителя. – М.: Просвещение, 1979.

4. *Львов М.Р.* Речь младших школьников и пути ее развития: Пособие для учителя. – М.: Просвещение, 1975.

5. *Нечаева Н.В.* Организация литературного творчества: Методические рекомендации. – М.: Новая школа, 1992.

6. *Политова Н.Н.* Развитие речи учащихся начальных классов. – М.: Просвещение, 1984.

7. Речь. Речь. Речь: Книга для учителя. – Под ред. Ладыженской Т.А. – М.: Педагогика, 1990.

8. Русский язык в начальных классах: Теория и практика обучения: Учебн. пособие для студентов пед. учеб. заведений. – Под ред. Соловейчик М.С. – М.: ЛИНКА–ПРЕСС, 1994.

9. *Светловская Н.Н.* Методика внеклассного чтения: Пособие для учителя. – М.: Просвещение, 1977.

### Чĕлхе пĕлĕвĕн тĕрлĕ сийĕнчи материалпа ĕçлесси, пуплеве аталантарасси

1. Чăваш чĕлхи урокĕсенче фонетикăпа графика материалĕсемпе ĕçлесси.
2. Чăваш чĕлхине вĕрентнĕ май ачасене тĕрĕс çырма вĕрентесси.
3. Ачасен пуплевĕнче тăтăш тĕл пулакан йăнăшсем, вĕсемпе ĕçлесси.
4. Тăван чĕлхе урокĕсенче лексика материалĕпе ĕçлесси.
5. Кĕçĕн çулхи ачасен орфографи тимлĕхне ӳстересси.
6. Чăваш чĕлхи урокĕсенче морфологи материалĕпе ĕçлесси.
7. Пуçламăш классенче япала ячĕ çинчен вĕрентесси.
8. Пуçламăш классенче глагол çинчен вĕрентесси.
9. Пуçламăш классенче паллă ячĕ çинчен вĕрентесси.
10. Пуçламăш классенче синтаксис материалĕпе ĕçлесси.
11. Чăваш чĕлхи урокĕсенче чарăну палли лартма вĕрентесси.
12. Пуçламăш классенче изложени çырма вĕрентесси.
13. Пуçламăш классенче сочинени çырма вĕрентесси.
14. Пуçламăш классенче ĕç хучĕсем çырма вĕрентесси.
15. Пĕчĕк комплектлă шкулта чăваш чĕлхи урокĕсене йĕркелессин уйрăмлăхĕсем.
16. Чĕлхе урокĕсенче текстпа ĕçлеме вĕрентесси.
17. Пĕлӳ, хăнăху шайне тĕрĕслемелли мелсем.
18. Чĕлхе материалĕпе пуплеве йĕркелес ĕçре усă курма вĕрентмелли меслетсемпе мелсем.

### Усă курмалли литература


1. «Чăваш чĕлхи методики». Пуçламăш шкул учителĕсемпе вĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли. – Шупашкар, 2002.
2. Тăван чĕлхе урокĕсем. 1 – 4 классем валли.
3. *Васильева Е.Ф.* Пуçламăш классенче ачасен пуплевне аталантарасси. – Шупашкар, 1981.
4. Родной и русский языки в начальных классах чувашской школы: Сб. статей. – Вып. 1, 2.
5. *Сергеев Л.П.* Чăваш чĕлхине пуçламăш шкулта вĕрентессин хăш-пĕр ыйтăвĕсем. – Шупашкар, 1998.
6. *Цаплина Р.И.* Обучение орфографии родного языка в чувашской начальной школе. – Чебоксары, 1957.
7. *Львов М.Р.* Речь младших школьников и пути ее развития: Пособие для учителя. – М.: Просвещение, 1975.
8. *Нечаева Н.В.* Организация литературного творчества: Методические рекомендации. – М.: Новая школа, 1992.
9. *Политова Н.Н.* Развитие речи учащихся начальных классов. – М.: Просвещение, 1984.

10. Речь. Речь. Речь: Книга для учителя. – Под ред. Ладыженской Т.А. – М.: Педагогика, 1990.

11. Русский язык в начальных классах: Теория и практика обучения: Учебн. пособие для студентов пед. учеб. заведений. – Под ред. Соловейчик М.С. – М.: ЛИНКА–ПРЕСС, 1994.

12. *Панов М.В.* Занимательная орфография. – М., 1984.

Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви
Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

Чăваш чĕлхине вĕрентес меслетлĕх кафедри

**Ершова Галина Николаевна**

**Диплом ĕçĕ**

# ПĔЧĔК КОМПЛЕКТЛĂ ШКУЛСЕНЧЕ ПУÇЛАСА ВУЛАМА-ÇЫРМА ВĔРЕНТЕС ĔÇЕ ЙĔРКЕЛЕССИН УЙРĂМЛĂХĔСЕМ

**Ăслăлăх ертӳçи – педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ Игнатьева В.И. доцент**

Шупашкар 2006

Диплом ӗҫӗн авторӗ — психологипе педагогика факультечӗн пуҫламӑш шкул учителӗсене хатӗрлекен уйрӑмӗнче вӗренекен *Ершова Галина Николаевна*

Ӑслӑлӑх ертӳҫи — педагогика ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ Игнатьева В.И. доцент

Диплом ӗҫне хӳтӗлеме ирӗк парас

Кафедра ертӳҫи
педагогика ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ — Сидоров П.Н. доцент

2006 ç. ________________

Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви
Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
«И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

Чăваш чĕлхине вĕрентес меслетлĕх кафедри

**Курс (тĕрĕслев) ĕçĕ**

# ВУЛАВ УРОКĔСЕНЧЕ ТЕКСТПА ĔÇЛЕССИ

Ĕçе пурнăçлаканĕ – психологипе педагогика факультечĕн пуçламăш шкул учителĕсене хатĕрлекен уйрăмĕнче вĕренекен *Ершова Галина Николаевна*

Ăслăлăх ертӳçи – педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ *Игнатьева В.И.* доцент

Шупашкар 2006

## ТУПМАЛЛИ

**Чăваш чĕлхипе çырмалли тĕрĕслев ĕçĕсем** ........ 3

Лексикологи. Фразеологи. Лексикографи ........ 5

Фонетика. Орфоэпи. Графика. Орфографи ........ 7

Морфемика. Сăмах пулăвĕ. Морфонологи ........ 10

Морфологи ........ 12

Синтаксис ........ 14

*Сăмах майлашăвĕ* ........ 14

*Хутсăр предложени* ........ 18

*Сыпăнуллă хутлă предложени* ........ 20

*Пăхăнуллă хутлă предложени* ........ 22

*Союзсăр хутлă предложени* ........ 24

**Тăван чĕлхе меслетлĕхĕпе çырмалли тĕрĕслев ĕçĕ** ........ 37

**Тăван чĕлхене пуçламăш классенче вĕрентмелли меслетлĕхпе çырмалли курс тата диплом ĕçĕсем** ........ 43

Учебное издание

Андреева Евдокия Александровна
Денисова Татьяна Витальевна
Игнатьева Валентина Ивановна

# ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК И МЕТОДИКА ЕГО ПРЕПОДАВАНИЯ

Учебно-методическое пособие

Научный редактор Л.П. Сергеев

Подписано в печать 30.12.05. Формат 60Х84/16.
Бумага писчая. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 3,8. Тираж 100 экз. Заказ № 1182.

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

ТУПМАЛЛИ

Чăваш чĕлхине [illegible] ...... 3
Лексикологи. Фразеологи [illegible] ...... 5
Фонетика. Орфоэпи. Графика. Орфографи ...... 7
Морфемика. Сăмах пулăвĕ. Морфонологи ...... 10
Морфологи ...... 12
Синтаксис ...... 14
*Сăмах майлашăвĕ* ...... 14
*Хутсăр предложени* ...... 18
*Сыпăнуллă хутлă предложени* ...... 20
*Пăйăнуллă хутлă предложени* ...... 22
*Союзсăр хутлă предложени* ...... 24
Тăван чĕлхе меслетлĕхĕпе [illegible] тĕрĕслев ĕçĕ ...... 37
Тăван чĕлхене пуçламăш классенче вĕрентмелли меслетлĕхпе [illegible] курс тата [illegible] ...... 43